ЧР ВМХПВ «Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ» БУ

# 2–3 ÇУЛХИ АЧАСЕН ВĂЙĂ ХĂНĂХĂВĔСЕНЕ АТАЛАНТАРАССИ

Шкул умĕнхи вĕренĕвĕн программине пурнăçлакан воспитательсем валли хатĕрленĕ меслет кăтартăвĕ

Шупашкар
2021

УДК 373.2
ББК 74.1
И 41

Пухса хатĕрлекенĕ – ***Н.В. Доброва,*** филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ

Пособие хатĕрлеме хутшăннă педагогсем:

***Н.Н. Партасова***, Чăваш Республикинчи Шупашкар районĕнчи Кӳкеçри «Ягодка» ача сачĕн воспитателĕ,

***Р.Г. Макарова,*** Чăваш Республикинчи Шупашкар районĕнчи Кӳкеçри «Ягодка» ача сачĕн воспитателĕ,

***Р.В. Чернова,*** Чăваш Республикинчи Шупашкар районĕнчи Кăрмăшри «Калинушка» ача сачĕн воспитателĕ,

***Н.В. Матвеева,*** Чăваш Республикинчи Шупашкар хулин 188-мĕш номерлĕ «Новоград» ача сачĕн учитель-логопечĕ

И 41 **2–3 çулхи ачасен вăйă хăнăхăвĕсене аталантарасси** / Н.В. Доброва пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар: ЧР ВМХПВ «Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ» БУ, 2021. – 63, [1] с.

Меслет кăтартăвне «Ача çуралнăранпа шкула кайиччен» программăпа ĕçлекен педагогсене пулăшас тĕллевпе хатĕрленĕ.

**УДК 373.2**
**ББК 74.1**

© Н.В. Доброва, пухса хатĕрлени, 2021
© ЧР ВМХПВ «Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ» БУ, 2021

# УМĔН КАЛАНИ

Виçĕ çула кайнă ачасен аталанăвĕнче сюжетпа сăнарлакан вăйăсем ытларах тĕл пулаççĕ. Ку вăйăсем малашне сюжетпа рольлĕ вăйăсене аталантарма пулăшаççĕ. Малтанлăха вăйă тăршшĕ нумая тăсăлмасть-ха (3–6 минут). Педагог вăйă хăнăхăвĕсене çирĕплетме пулăшса пынă май унăн тăршшĕ те ӳссе пырать (8–10 минут).

Вăйă хăнăхăвĕсем аталанса пынăçемĕн тĕрлĕ япаласемпе усă курассин мелĕсем, вăйăри ĕç тĕсĕсем те йышлăланаççĕ. Ача савăнсах хăй таврашĕнчи çынсен тыткаларăшĕсене евĕрлеме пуçлать. Çулталăк пуçламăшĕнче сюжет йĕрĕнчи ĕçсем тĕлсĕртерех пулса пыраççĕ пулсан, çулталăк вĕçнелле ача ĕçсен йĕркине черетпе туса пыма хăнăхать, сюжет йĕрĕнчи ĕçсен хисепĕ те ӳссе пырать. Тĕслĕхрен, малтан ача пуканене апат çитерсе çывăрма вырттарма пултарнă пулсан, каярах – апат хатĕрлет, çитерет, çывăрма вырттарать.

Сюжетлă вăйăсене хăйсене тĕллĕн выляма хăнăхтарасси педагогăн тĕп тĕллевĕ пулса тăрать. Тĕпчевçĕсем палăртнă тăрăх, çитĕннисем вăййа тĕрлĕ задачăсене татса парас тĕллевпе йĕркеленĕ пулсан çеç вĕсем ачасене аталанма пулăшаççĕ. Педагог ачана тӳрремĕн калама пултарать: «Пуканене çывăрма вырттар». Ача пуканене çывăрма вырттармаллине хăй ăнланса илтĕр тесе педагог урăхларах та калама пултарать: «Пукане ывăннă, çывăрасшăн». Вăйă хăнăхăвĕсем çирĕпленсе пынă май педагог задачăсене йывăрлатса пырать. Ачан выляс кăмăлĕ пултăр, вăйă уншăн интереслĕ пултăр тесен вăйăра ачапа çитĕннисен хутшăнăвĕ эмоциллĕ ситуацисем çинче йĕркеленмелле.

Педагог ачасене тĕрлĕ япаласемпе выляма мĕн пур услови туса парать. Пӳлĕмре хăйсем тĕллĕн вылямалли, тĕрлĕ сюжетлă вăйăсене вылямалли ятарлă кĕтессем (зонăсем), кашни сюжета евĕрлесе памалли хатĕрсем пулмалла. Тапхăрăн-тапхăрăн воспитатель зонăсене ылмаштарать, урăх теттесем хушать.

Ку пособире усă куракан вăйăсен тематики:

• пуканепе вылясси;
• машинăпа е ытти транспортпа вылясси;
• чĕр чун теттесемпе вылясси;
• строительство материалĕсемпе вылясси;
• магазинла вылясси;

• больницăлла вылясси;
• ял пурнăçне сăнласа вылясси;
• мастерскойла вылясси;
• парикмахерскилле вылясси;
• почтăлла вылясси.

Пособире сĕнекен вăйă-ситуацисен сюжечĕсене тĕрлĕ мелсемпе усă курса выляттарма пулать. Çулталăк тăршшĕнче пĕр вăййа тĕрлĕ задачăсем лартса, ситуацисене ылмаштарса, рольсем хушса ирттерме май пур. Кунпа пĕрлех воспитатель кашни вăйă-ситуацирех вĕренӳ занятине кусса каймасăр япаласен кирлĕлĕхне, çĕнĕ хусканусемпе ĕç тĕсĕсене, хатĕрсене мĕнле усă курмаллине тата ыттине ăнлантарса парать.

Пособи Н.Е. Вераксы, Т.С. Комарова, М.А. Васильева редакциленĕ «Ача çуралнăранпа шкула кайиччен» тĕслĕх программа çинче никĕсленет, кĕçĕн ӳсĕмри иккĕмĕш ушкăна çӳрекен ачасен вăйă хăнăхăвĕсене аталантарма пулăшать. Ку кĕнекепе шкулчченхи вĕренӳ организацийĕсенче ĕçлекенсем, ашшĕ-амăшĕсем, çавăн пекех педагогика колледжĕпе аслă шкулсен студенчĕсем усă курма пултараççĕ.

# Авӑн уйӑхӗнче irttermelli вӗрентӳллӗ вӑйӑсем

## *1-мӗш вӑйӑ.* **Пирӗн картишӗнче**

***Тӗллевсем:*** ачасене вӑйӑпа кӑсӑклантарасси, сасӑ интонацине евӗрлеме вӗрентесси.

***Кӑтарту хатӗрӗсем***: хӗр тумӗн элеменчӗсем (тутӑр, саппун); ӗне, чӑх (теттесем).

***Ытти ӗҫ-хӗлпе ҫыхӑнни*:** музыка, экологи, пуплев аталанӑвӗ.

В ӑ й ӑ  ю х ӑ м ӗ

Воспитатель кукамай тумтирӗпе, ачасене картишне чӗнет, унти чӗр чунсемпе паллаштарать. Малтан ачасем ӗне (тетте) патне пыраҫҫӗ. Кукамай (воспитатель) ачашшӑн ӗнене чӗнет: «Милюҫ, сас парсам!»

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, айтӑр, пӗрле чӗнер. Милюҫ, сас парсам!

Ӗ н е. Му-у-у!

Воспитатель ачасене ӗне епле муклатнине туса кӑтартма ыйтать. Ачасем муклатса кӑтартаҫҫӗ. Воспитатель «Ӗне ӑҫта?» сасӑ вӑййи irttерет, А. Ильин ҫырнӑ «Ӗне» сӑвва вулать.

В о с п и т а т е л ь.

Урамра ӗне тӑрать,
Чарӑнмасӑр муклатать:
– Мук! Мук! Му-у-ук!
Алӑк уҫ, Куҫук!
Илсе килтӗм сан валли
Ӑшӑ сӗт витре тулли.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, ӗне мӗнле муклатать?

А ч а с е м *(воспитательпе пӗрле).* Му-у-у!

В о с п и т а т е л ь *(пӳрнепе юнаса).* Вӑл урамра тӑрать!

А ч а с е м *(воспитательпе пӗрле).* Му-у-у!

В о с п и т а т е л ь *(пӳрнепе юнаса).* Вӑл чарӑнмасӑр муклатать.

Воспитатель вӑййа 2–3 хут irttерет. Унтан ачасене «чӑх йӑвине» чӑх (тетте) патне илсе каять. Ачасем чӑх тавра тӑраҫҫӗ. Воспитатель ачасене чӑхпа выляма чӗнет. Хаваслӑ юрӑ янӑрать.

В о с п и т а т е л ь (*ачасем унпа пӗрле хусканусем тӑваҫҫӗ*).

Кăлăк чăххи кускалать,
Чĕпписене йыхăрать.
Çунат айне пуçтарать –
Хура пĕлĕт çывхарать.
Кăлăк чăххи кăт-кăт-кăт!
Çумăр пĕрчи пăт-пăт-пăт!

Воспитатель ачасене теттесемпе сывпуллашма ыйтать.

## *2-мĕш вăйă.* Хĕвел тухать

***Тĕллевсем:*** ачасене вăйă лару-тăрăвне кĕртесси, туйăмĕсене вăратса вăйлатасси, хускану активлăхне аталантарасси.

***Кăтарту хатĕрĕсем***: хĕвел.

***Ытти ĕç-хĕлпе çыхăнни*:** музыка, экологи, пуплев, хускану аталанăвĕ.

В а й ă ю х ă м ĕ

Воспитатель ачасене уçланкăна чĕнет. Ачасем ушкăнпа тăраççĕ. Педагог ачасене юмах урлă вăйă лару-тăрăвне кĕртсе ярать.
Воспитатель хĕвел çинчен юмах каласа парать.

В о с п и т а т е л ь. Ир-ирех кукамай картишĕнче хыттăн кăшкăрни илтĕнсе каять: «Ку-ка-ре-ку!» Кам кăшкăрать унта? Ку автан. Вăл пĕр ури çинчен теприн çине мăнаçлăн пусса, çунаттисене паттăррăн çапса юрлать: «Ку-ка-ре-ку! Ку-ка-ре-ку! Хĕвел, вăран! Ку-ка-ре-ку! Ку-ка-ре-ку! Хĕвел, вăран!

Хĕвел вăрман хыçĕнче çывăрать. Вăл автан хытă юрланипе вăранчĕ. Хĕвел анасласа илчĕ, карăнса вăрман çийĕн хăпарма пуçларĕ. Ăна пурте курчĕç те кăшкăрса ячĕç: «Ах, епле илемлĕ вăл, пирĕн хĕвел! Акă мĕнле ăшă хĕвел!»

Воспитатель хĕвеле (курăмлăх хатĕрне) çĕклет те стена çумне çирĕплетет.
Ачасем Р. Сарпин «Хĕвел» сăвви тăрăх В. Салихов кĕвĕленĕ юрра юрлаççĕ, текстпа килĕшӳллĕ хусканусем тăваççĕ.

В о с п и т а т е л ь п е а ч а с е м.

Хĕвел, тух, хĕвел, тух (*ачасем ерипен аллисене çӳлелле çĕклеççĕ*),
Хĕвне кулă чиксе тух!
Вăй выля пирĕнпеле,
Таш ташла пирĕнпеле (*ачасем ирĕккĕн ташă хусканăвĕсем тăваççĕ*).
Хĕвел, тух, хĕвел, тух (*ачасем ерипен аллисене çӳлелле çĕклеççĕ*),

Хĕвне кулă чиксе тух!
Шевлӳсене парнеле,
Сарă кун пире пилле.
Таврăн каялла,
Таврăн каялла
Йăлтăр-йăлтăр куллупа!
О-о-о-о-о...
Таврăн каялла,
Таврăн каялла
Йăлтăр-йăлтăр куллупа!
Хĕвел, тух, хĕвел, тух!
Ля-ля-ля... Ля-ля-ля...
Ля-ля-ля... Ля-ля-ля...

Воспитатель ачасене хĕвелпе пĕрле савăнма, ăна хăнана чĕнме сĕнет.
«Хĕвел тата çумăр» пӳрне гимнастики ирттерет.

В о с п и т а т е л ь.

Тӳпере хĕвел
Хаваслăн пăхать.
Хаваслăн пăхать,
Ачасене ăшăтать.

Ачасем аллисене çӳлелле çĕклесе енчен еннелле сулаççĕ.

В о с п и т а т е л ь.

Вĕтĕ çумăр пĕрчисем
Çулсене йĕпетрĕç.
Пăт-пат! Çумăр пĕрчисем
Çулсене йĕпетрĕç (*алă сыппине хуллен силлеççĕ*).
Çумăр, эс пире ан хăрат (*пӳрнепе юнаççĕ*),
Çумăр, эс пирĕнпе выля (*сапаланса чупаççĕ*)!

## *3-мĕш вăйă.* **Чечек уçланки**

***Тĕллевсем:*** ачасене вăйă сюжечĕпе кăсăклантарса ярасси; вăййа хутшăнтарасси; кăмăл-туйăма хавхалантарасси.

***Кăтарту хатĕрĕсем***: вазăри чечек çыххисем, пуç çине тăхăнмалли хирти чечексене евĕрлекен кăшăлсем (салтак тӳми, утмăл турат т. ыт. те); фланелеграф тата фланелеграф çине çакмалли ӳкерчĕксем (хĕвел, автан).

***Ытти ĕç-хĕлпе çыхăнни*:** музыка, экологи, пуплев аталанăвĕ.

## В ă й ă   ю х ă м ĕ

Воспитатель ачасене «чечек уçланкине» (чечек çыххисемпе илемлетнĕ пӳлĕме) илсе килет. Ачасене пуç кăшăлĕсем (салтак тӳми, утмăл турат т. ыт. те) тăхăнтартать.

В о с п и т а т е л ь.

Янăрать хут купăс уççăн,
Савăнмашкăн йыхăрать.
Атьăр пĕрле пухăнар,
Чечексемпе таш ташлар!

Ачасем лăпкă кĕвĕ çеммипе чечек çыххисем тавра ирĕккĕн утса çӳреççĕ.
Воспитатель «чечексемпе» паллашма сĕнет. Ачасем мăшăрăн тăрса пĕр-пĕрне алăран тытаççĕ, пуç таяççĕ.
Воспитатель «Пĕрне-пĕри ал парар» паллашу юрри юрлать.

В о с п и т а т е л ь.

Ешĕл улăх варринче
Чечексем ӳсеççĕ.
Чĕвĕл-чĕвĕл сассемпе
Шăппăн калаçаççĕ.

«Чечексем» ачасем патне пыраççĕ.

В о с п и т а т е л ь.

Пĕрне-пĕри ал парар,
Ăшшăн пăхса йăл кулар,
Пуç таяр та çаврăнар.

Ачасем хăйсем тавра çаврăнаççĕ.
Воспитатель черетпе кашни мăшăр патне пырать.
Ачасем сĕннĕ хусканусене пурнăçлаççĕ.

Унтан педагог ачасене чечексем ăшша юратнине калать, фланелеграф çинчи хĕвелпе автана кăтартать. Ачасем хĕвел çинчен илтнĕ юмаха аса илеççĕ. Воспитатель юмах тăрăх ыйтусем парать (фланелеграф çинчи ӳкерчĕксем хуравлама пулăшаççĕ): «Пуринчен малтан мĕн вăраннă? Автан мĕне вăратнă? Хĕвел çинчен мĕн каланă?».

Унтан воспитатель ачасене автан мĕнле авăтнине, çуначĕсемпе епле çапнине кăтартса пама ыйтать.

## *4-мĕш вăйă.* **Кукăль пĕçеретпĕр**

***Тĕллевсем:*** ачасене тыр-пул епле пухса илни çинчен пĕлтересси, вăййа явăçтарасси, ритм туйăмне аталантарасси.

***Кăтарту хатĕрĕсем***: пучахсем, çăнăх.

***Ытти ĕç-хĕлпе çыхăнни:*** музыка, экологи, пуплев аталанăвĕ.

В ă й ă  ю х ă м ĕ

Воспитатель ачасене уйра тырă (ыраш, тулă, сĕлĕ) пиçсе çитни çинчен пĕлтерет. Тырă пучахĕсене кăтартать. Тырра авăртмалла, унтан вĕтетмеллине ăнлантарса парать. Пучахсене армана леçме сĕнет. Ачасем пĕр-пĕрин хыççăн тăрса «армана каяççĕ».

Воспитатель «Пучахсене турттаратпăр» вăйă-хускану ирттерет.

В о с п и т а т е л ь.

Та-та-та! Та-та-та!
Турттаратпăр машинпа
Çул хĕрринчи армана
Тĕлĕнтермĕш пучаха.
Çакă тулли пучахран
Шурă çăнăх тумалла.

Воспитатель пучахсене пуçтарать, ачасене çăнăх кăтартать: «Акă, тырăран мĕн пулчĕ», – тет.

В о с п и т а т е л ь.

Унтан шурă çăнăхран
Тутлă кукăль тумалла.

Малалла воспитатель ачасене инсценировка кăтартать.

В о с п и т а т е л ь.

Та-та-та! Та-та-та!
Атьăр çăнăх алама,
Та-та-та! Та-та-та!
Пуçлар кукăль пĕçерме.
Чусти хăпарать,
Тытса чарма çук,
Кукăлĕ пулать –
Çĕнĕ тырăран!
Кукăль пĕçеретпĕр те –
Хăнана чĕнетпĕр.

Пĕрле кукăль çиййĕпĕр,
Сирĕнпе савăнăпăр.
Ку – купăста

А ч а с е м (*аллисене ал тупанĕсемпе çӳлелле çĕклесе малалла тăсаççĕ*). Кукăлĕ.

В о с п и т а т е л ь.

Ку вара – çĕр улми

А ч а с е м. Кукăлĕ!

В о с п и т а т е л ь.

Чи тутли – хăмла çырли

А ч а с е м. Кукăлĕ!

В о с п и т а т е л ь.

Пиçĕр, пиçĕр, кукăльсем,
Çĕнĕ тырăран!

Хаваслă кĕвĕ янранă май ачасем воспитательпе пĕрле «кукăль пĕçерееççĕ».

## Юпа уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем

### *1-мĕш вăйă.* Карусель

***Тĕллевсем:*** туйăмсене пуянлатасси, ачасен хускану активлăхне вăратасси.

***Кăтарту хатĕрĕсем***: карусель (урайне вырнаçтарнă, тăррине вăрăм хăю çыхнă юпа е шалча), арăслан, тимĕр шапа, лаша теттесем, тутăрсем.

***Ытти ĕç-хĕлпе çыхăнни.*** музыка, пуплев аталанăвĕ, илемлĕ литература.

В ă й ă   ю х ă м ĕ

Воспитатель ачасене карусельпе ярăнма чĕнет. Темиçе ача карусель лентине тытса кĕвĕ май ерипен утма пуçлаççĕ. Ытти ачасем хăйсен черетне кĕтеççĕ, тутăрĕсемпе сулаççĕ.

В о с п и т а т е л ь.

Каруселĕ, каруселĕ
Ерипен çеç тапранчĕ.
Каярах, каярах
Çил пек çаврăнчĕ.

Ывӑнчӗ пулмалла –
Чӗриклетрӗ те шӑпланчӗ.

Ачасем воспитатель хӑвӑртлӑхӗпе килӗшӳллӗн утаççӗ.
Педагог ачасене карусель çинче тӗрлӗ чӗр чунсем çинче ярӑнма май пулнине каласа парать. Теттесене кӑтартса вӗсем çинчен сӑвӑсем вулать.

**Арӑслан**

Чӗр чунсен патши тесе
Мухтанать пит арӑслан.
Тӗрӗсне калать тесе
Шухӑшлӑн ӑна курсан.
(Ю. Мишши)

**Тимӗр шапа**

Тимӗр шапа култарать,
– Мӗншӗн тетӗр?
Васкамасть.
Пӳрчӗ унӑн хӑй çинчех,
Çавӑнпа васкас темест.
(Б. Заходер)

**Лаша**

Юрататӑп лашине –
Шав туратӑп çилхине.
Эп ӑна кӗç йӗвенлетӗп,
Хӑнана кайса килетӗп.
(А. Барто)

**Зебра**

Лаша мар, ашак та мар,
Йӑрӑм-йӑрӑм тӑрӑхлӑ.
...Çакӑн пек пусма-тавар
Кӗпене те юрӑхлӑ.
(Б. Борлен)

**Пони**

Пони ятлӑ ку лаша,
Питӗ пӗчӗк тамаша.
Тен, ӳссе кӑна çитмен,
Е апат çиме пӗлмен?
(Б. Борлен)

Ачасем сӗтел патне пырса кашни хӑйне валли карусельпе ярӑнма тетте суйласа илеççӗ. Вӑйӑ малалла тӑсӑлать.

## *2-мӗш вӑйӑ.* Йӑран çинчи çимӗçсем

***Тӗллевсем:*** ачасене пахча çимӗçпе паллаштарасси; хусканусене импровизацилесси.

***Кӑтарту хатӗрӗсем*:** пахча çимӗçе сӑнлакан маскӑсем (сухан, купӑста, редис т. ыт. те); мулкач (çемçе тетте).

***Ытти ӗç-хӗлпе çыхӑнни*:** музыка, физкультура, пуплев аталанӑвӗ.

В ӑ й ӑ ю х ӑ м ӗ

Воспитатель ачасене пахчана чӗнет. Çимӗçсемпе паллаштарать, вӗсем пиçсе çитнипе çитменнине сӑнаççӗ. Унтан ачасем пахча çимӗç маскисене тӑхӑнаççӗ.

Воспитатель «Пахчана тух» вăййа выляма чĕнет.

В о с п и т а т е л ь.

Пирĕн пĕчĕк пахчара
Симĕс сухан çитĕнет.
Ӳссем, сухан, хăвăртрах,
Кунта сана лайăх та.

А ч а с е м.

Ӳссем, сухан, хăвăртрах,
Кунта сана лайăх та.

Сухан маскине тăхăннă ача ташлать, ыттисем алă çупаççĕ.

В о с п и т а т е л ь.

Пирĕн пĕчĕк пахчара
Ӳсет симĕс купăста.
Ӳс, купăста, хăвăртрах,
Кунта сана лайăх та.

А ч а с е м.

Ӳс, купăста, хăвăртрах,
Кунта сана лайăх та.

Купăста маскине тăхăннă ача ташлать.

В о с п и т а т е л ь.

Пирĕн пĕчĕк пахчара
Тутлă редис çитĕнет.
Ӳссем, редис, хăвăртрах,
Кунта сана лайăх та.

А ч а с е м.

Ӳссем, редис, хăвăртрах,
Кунта сана лайăх та.

Редис маскине тăхăннă ача ташлать.

Вăйăра ачасен шучĕ тĕрлĕрен пулма пултарать (кăшман, хăяр, кавăн тата ытти çимĕçсем те хутшăнма пултараççĕ) е кашни çимĕç темиçешер (икĕ редис, виçĕ хăяр, виçĕ кавăн тата ыт. те).

Воспитатель ачасене мулкач (çемçе теттене) кăтартать, ун çинчен мĕн калама пултарнине ыйтать. «Мулкач сăрă, çăмлă. Унăн тăвата ура, вăл питĕ хăвăрт сикет», – тесе калать.

Ачасене мулкача хăналама сĕнет. Ачасем мулкача пахча çимĕç параççĕ.

Мулкач купăстапа кишĕр суйлса илет.

«Мулкач ларать пашкаса» сăвва каласа хусканусем тăваççĕ.

В о с п и т а т е л ь п е а ч а с е м.

Мулкач ларать пашкаса,
Ик хӑлхине вылятса.
Ак ҫапла, ак ҫапла,
Ик хӑлхине вылятса.

Ачасем малтанах воспитатель хыҫҫӑн пурнӑҫлаҫҫӗ, кайран хӑйсем тӗллӗн выляма пуҫлаҫҫӗ.
Вӑйӑ вӗҫӗнче ачасем мулкачпа сывпуллашаҫҫӗ.

## *3-мӗш вӑйӑ*. Садри ҫулҫӑсем

***Тӗллевсем:*** ачасене ҫӗнӗ юмахпа паллаштарасси; кӗвӗ-ҫемӗпе килӗшӳллӗ хусканусем тӑвасси.

***Кӑтарту хатӗрӗсем*:** кӗрхи ҫулҫӑсем; юмах валли ҫулҫӑсем (атте ҫулҫӑ – пысӑк та сарӑ тӗслӗ ҫулҫӑ; анне ҫулҫӑ – вӑтам та хӗрлӗ тӗслӗ ҫулҫӑ; ывӑл ҫулҫӑ – пӗчӗк те симӗс тӗслӗ ҫулҫӑ).

***Ытти ӗҫ-хӗлпе ҫыхӑнни:*** музыка, экологи, пуплев аталанӑвӗ.

В ӑ й ӑ  ю х ӑ м ӗ

Воспитатель ачасене кӗрхи ҫулҫӑсен илемӗпе паллаштарать (кӗрхи илеме чӳречерен е ӳкерчӗк ҫинче кӑтартать). Ачасем ҫулҫӑсене сӑнаҫҫӗ.
Воспитатель кӗркунне ҫинчен юрӑ итлеме сӗнет. Лӑпкӑ кӗвӗ янӑрать, ҫулҫӑ тытнӑ ачасем пӳлӗм тӑрӑх карталанса ҫӳреҫҫӗ. Воспитатель хыҫҫӑн ачасем кӑткӑс мар хусканусем тӑваҫҫӗ: ҫулҫӑсемпе сулаҫҫӗ, аллисене ҫӳлелле ҫӗклесе ҫаврӑнаҫҫӗ.
Воспитатель ачасене юмах каласа парать, юмахри паттӑрсемпе паллаштарать (ятарласа хатӗрленӗ ҫулҫӑсем: атте ҫулҫӑ – пысӑк сарӑ ҫулҫӑ; анне ҫулҫӑ – вӑтам хӗрлӗ ҫулҫӑ; ывӑл ҫулҫӑ – пӗчӗк симӗс ҫулҫӑ).

В о с п и т а т е л ь. Ҫулҫӑсен ҫемйи пурӑннӑ: ашшӗ, амӑшӗ тата пӗчӗк ывӑлӗ. Вӗсем ҫӳллӗ йывӑҫ ҫинче ҫакӑнса тӑнӑ. Ҫак ҫемьене пурте килӗштернӗ. Атте-ҫулҫӑ пысӑк та сарӑ пулнӑ. Анне-ҫулҫӑ пӗчӗкрех, хӗрлӗ тӗслӗ пулнӑ, ывӑл-ҫулҫӑ пӗчӗк, симӗсскер. Пурӑннӑ вӗсем, пурӑннӑ, турат ҫинче ҫакӑнса тӑнӑ. Пӗррехинче вӑйлӑ ҫил килсе ҫитнӗ. Атте ҫулҫӑ: «Вӗҫетпӗр!» – тенӗ. Пурте вӗҫме пуҫӑнаҫҫӗ:  атте ҫулҫӑ сывлӑшра вӑрах ҫаврӑнса тӑрать те йывӑҫ айне ӳкет. Анне ҫулҫӑ ҫул ҫине ӳкет. Ывӑл ҫулҫӑ турат ҫинче вӑрах ҫакӑнса тӑрать, унтан ашшӗпе амӑшӗ хыҫҫӑн вӗҫсе каять. Пӗчӗк ҫулҫӑ хӑвӑрт вӗҫсе анса амӑшӗнчен инҫе мар ӳкет. «Вӗҫме епле аван», – тесе шутлать симӗс ҫулҫӑ. Ҫил вӗрсе ҫулҫӑсене пӗр ҫаврана пуҫтарать, ҫынсем ҫакна курса: «Епле хитре!..» –теҫҫӗ.

Воспитатель ачасене юмах килĕшни çинчен ыйтса пĕлет, ыйтусем парать. «Йывăç çинче мĕн пурăннă? Вăйлă çил тухсан çулçăсем мĕн тунă? Çулçăсем ăçта ўкнĕ? Çынсем мĕн тенĕ?». Ун хыççăн Василий Эктел çырнă «Çулçăсем» сăвва вулать.

В о с п и т а т е л ь.

– Кам сăрланă-ши, анне, вĕрене çулçисене?
Пулнă тăнă симĕсрен хĕрлĕ, сарă та кĕрен.
– Вăл – асамçă кĕркунне, – хуравларĕ ман анне.

Вăйă вĕçĕнче воспитатель ачасене уçăлма тухсан тĕрлĕ тĕслĕ çулçăсем пуçтарма сĕнет.

## *4-мĕш вăйă*. Улăхри кăвакал чĕпписем

***Тĕллевсем:*** ачасен интонациллĕ калаçу пĕлĕвне аталантарасси; çĕнĕ юмахпа паллаштарасси; герой теттесен сăмахĕсемпе ĕçĕсене сăнама вĕрентесси.

***Кăтарту хатĕрĕсем*:** кăвакал амăшĕ; кăвакал чĕппи, хур (теттесем).

***Ытти ĕç-хĕлпе çыхăнни:*** музыка, сăнарлă ўнер ĕç-хĕлĕ, экологи.

В ă й ă ю х ă м ĕ

Воспитатель ачасене кăвакал (тетте) кăтартать, ăна сăнарлама сĕнет. «Кăвакал картишне тухрĕ те чĕпписене чĕнме пуçăнчĕ», – тесе калать воспитатель. «Кăвакал тата кăвакал чĕпписем» сасă вылявĕн вăййине иртterет.

В о с п и т а т е л ь *(кăвакала евĕрлесе).*

Кăвакал чĕпписене
Ирпе ирех йыхăрать.
– Ăçта эсир, нарт-нарт-нарт?
Сасă парăр, нарт-нарт-нарт!

А ч а с е м *(кăвакал чĕпписене евĕрлесе).*

– Нарт, нарт! Нарт, нарт!

В о с п и т а т е л ь.

Илсе тухрĕ картишне,
Эх, пуçларĕ вĕрентме:
– Нарт-нарт-нарт, ачасем,
Валашкара шыв пур-ши?

А ч а с е м.

– Нарт, нарт! Нарт, нарт!

В о с п и т а т е л ь.

– Чĕппĕмсем, кўлĕ хĕрнелле!

Кăвакал амăшĕпе кăвакал чĕпписем (теттесем) «кўлĕ хĕрне» анаççĕ.

В о с п и т а т е л ь.

Çутă кӳлĕ хĕрринче
Тупрĕç тата пĕр ăман:
– Ак телей, нарт-нарт-нарт!
Кунта килни ахаль мар!

Воспитатель ачасене теттесен театрне «Кăвакал историйĕ» спектакль курма чĕнет.

Е р т с е п ы р а к а н *(воспитатель).* Кукамай кил картишĕнче кăвакал амăшĕпе унăн пĕчĕк чĕппи – ывăлĕ пурăннă. Кăвакалпа чĕппи кунĕпех пĕрле пулнă. Амăшĕ ывăлне пĕвене ертсе çӳренĕ, сĕтеклĕ курăк шырама, ăмансем тупма вĕрентнĕ.

Пĕррехинче кăвакалсем шыва кĕме аннă. Питĕ шăрăх пулнă. Кăвакал чĕппи питĕ инçе ишсе каять. Кăвакал амăшĕ кулянса ӳкет.

К ă в а к а л. Ывăлăм, таврăн! Нарт-нарт!

Е р т с е п ы р а к а н**.** Анчах кăвакал чĕппи шыва чăма-чăма малаллах ишнĕ.

К ă в а к а л ч ĕ п п и. Акă эпĕ еплерех ишме пултаратăп! Нарт-нарт!

К ă в а к а л. Чĕппĕм, çыран хĕрне таврăн! Нарт-нарт!

Е р т с е п ы р а к а н. Анчах кăвакал чĕппи амăшне итлемен. Вăл шывра шăмпăлтатнă, унăн кăмăлĕ питĕ лайăх пулнă. Сасартăк кăвакал чĕппи умне темĕнле тискер кайăк ишсе тухать. Вăл кăвакал чĕппине ыраттармалла сăхса илет, ăна тĕртсе чашкăрса ярать: «Ш-ш-ш...». Кăвакал чĕппи питĕ хăраса ӳкет, тапаçланма пуçлать.

К ă в а к а л ч ĕ п п и. Анне! Эпĕ хăратăп! Нарт-нарт!

Е р т с е п ы р а к а н. Хăрушă тискер кайăк какалама пуçлать.

Х у р. Ка-как! Тыт ăна! Тыт ăна! Ка-ка-как!

Е р т с е п ы р а к а н. Кăвакал чĕппи хăраса ӳкет те мĕн вăй çитнĕ таран çыран хĕрне ыткăнать. Унта ăна амăшĕ кĕтсе илет.

К ă в а к а л. Чĕппĕм, мĕн пулчĕ?

К ă в а к а л ч ĕ п п и. Аннеçĕм, унта хăрушă кайăк ишсе çӳрет!

К ă в а к а л. Савнă чĕппĕмçĕм, ку пирĕн кӳршĕ – хур. Вăл итлемен кăвакал чĕпписене питĕ юратмасть.

Е р т с е п ы р а к а н. Çав вăхăтра хур шывран мăнаçлăн какаласа тухать.

Х у р. Ну, амăш-ш-шĕ, сир-рĕн ашкăнчăк сывах-и? Ка-ка-как!

К ă в а к а л. Нарт, манăн чĕппĕм сывах, тавах сана, кӳршĕм.

К ă в а к а л ч ĕ п п и. Халĕ эпĕ урăх инçете ишсе каймастăп, хур пичче.

Е р т с е п ы р а к а н. Кăвакал амăшĕпе чĕппи килелле утрĕç.

Воспитатель ачасенчен юмах килĕшнипе килĕшменнине ыйтса пĕлет, содержанийĕ тăрăх ыйтусем парать.

## Чӳк уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем

### *1-мĕш вăйă.* **Хаваслă автобус**

***Тĕллевсем:*** ачасене вăйă лару-тăрăвне явăçтарасси; тĕрлĕ интонаци сассине сăнласа пама вĕрентесси.

***Кăтарту хатĕрĕсем*:** автобусла выляма темиçе пукан; чăхпа чĕппи-сем, кăвакалпа кăвакал чĕпписем, хур, кушак аçи, вăкăр (теттесем).

***Ытти ĕç-хĕлпе çыхăнни:*** музыка, экологи, тăван тавралăх, пуплев аталанăвĕ.

В ă й ă  ю х ă м ĕ

Воспитатель ачасене автобуспа ярăнма чĕнет. Ачасем пĕр-пĕрин хыççăн лартса тухнă пукансем çине вырнаçса лараççĕ. Малта водитель (ача) ларать, вăл руль тытать. Хавaслă юрă юрласа («Автобус» сăвви А. Кăлканăн, кĕвви Н. Казаковăн) ачасем яла «каяççĕ».

В о с п и т а т е л ь.

Тӳрĕ, тикĕс çулпала
Пĕр автобус вĕçтерет.
Хăйне ирĕк çул пама
Таçтанах вăл систерет.
Ту-ту-ту! Ту-ту-ту!
Таптанатăн вĕт, асту!

А ч а с е м.

Ту-ту-ту!

В о с п и т а т е л ь.

Ай-хай лаши ăмăртса
Çул айккипе сиктерет.
Автобусĕ васкаса
Тата хытă вĕçтерет.
Ту-ту-ту! Ту-ту-ту!
Таптанатăн вĕт, асту!

А ч а с е м.

Ту-ту-ту!

Педагог ачасене хăйсем пĕлекен кукамай картишне çитни çинчен пĕлтерет. Вĕсене кил картинче пурăнакансем кĕтсе илеççĕ: чăхпа чĕпписем, кăвакалпа кăвакал чĕпписем, хур, кушак аçи, вăкăр (теттесем). Воспитатель ачасене чĕр чунсемпе кайăк-кĕшĕк патне черетпе ертсе пырать. Унтан «Кил картинче кам мĕнле сас парать?» сасă вăййи ирттерет.

В о с п и т а т е л ь *(кукамай пек тăхăнса).*

Кăлăк чăххи кускалать,
Чĕпписене йыхăрать,
Çунат айне пуçтарать –
Кăт-кăтик! Кăт-кăтик!

Ачасем пукансем хыçне пытанаççĕ.

Ч ĕ п ĕ с е м ( *ачасем ура çине тăрса çинçе сасăпа хуравлаççĕ*).

Шимп-шимп-шимп!
Шимп-шимп-шимп!
Эс пире шыратăн-и?

К у к а м а й.

Нарт-нарт кăвакал
Чĕпписене йыхăрать,
Шыв хĕрнеллеваскатать.
Ути-ути-ути, утăрах!
Кӳлĕ авă çывăхрах.

Ч ĕ п ĕ с е м (*ачасем кăвакал чĕпписем пек тăрса, савăнăçлăн хуравлаççĕ).*

Нарт-нарт-нарт!
Кӳлĕ авă çывăхрах.

К у к а м а й.

Вăкăр хытă мĕкĕрет,
Вĕрлĕке пырса хирет...
А. Тимпай «Вăкăр».

В ă к ă р *(мĕскĕннĕн).*

Му-му-му-у!
Му-му-му-у!

К у к а м а й.

Мăйне тăсса, какаклатса
Хур аçи ташша çапать.
Кушак аçи мăрлатса
Тарăннăн ыйха путать.

К у ш а к а ç и. Мăр-мăр-мăр! Мяук-мяук!

Х у р. Ка-ка-ка!

Кукамай ачасене сак çине ларма чĕнет. Кăвакал, кăвакал чĕппине, хура (теттесене) илет те ачасене «Кăвакал историйĕ» юмаха аса илме сĕнет.
Ачасене ыйтусем парать: «Кукамай картишĕнче кам пурăннă? Кăвакал амăшĕпе чĕппи кунĕпех мĕн тунă? Кăвакал чĕппи пĕвере мĕн тунă? Ăна кам хăратнă?

Хур кăвакал чĕппине çыран хĕрне мĕнле хăваласа кăларнă?
Кăвакал амăшĕ мĕншĕн савăннă?»
Воспитатель ачасене сăмахпа, интонаципе, хусканусем кăтартса хурав пама хавхалантарать. Кайран кукамай картишĕнчи чĕр чунсемпе сывпуллашма хушать. Воспитательпе ачасем «автобуспа» киле таврăнаççĕ.

## *2-мĕш вăйă.* **Мăйракаллă качака**

***Тĕллевсем:*** ачасене вăйă лару-тăрăвне явăçтарасси; ăсра сăнарлас пултарулăхпа, тĕрлĕ япалапа усă курма вĕрентесси.

***Кăтарту хатĕрĕсем*:** качака, чакак (теттесем), кастрюль.

***Ытти ĕç-хĕлпе çыхăнни:*** музыка, пуплев аталанăвĕ, илемлĕ литература.

В ă й ă ю х ă м ĕ

Воспитатель пӳлĕме качака (тетте) илсе килет. Ачасем качака патне пырса ăна ачашлаççĕ.

В о с п и т а т е л ь.

Шур сухаллă, мăйракаллă,
Сăрă куçлă çак чĕр чун.
Уткалать-çке каллĕ-маллĕ,
Иртĕхет те тепĕр чух.

Воспитатель качака путеккине ачашлать те ачасем енне çаврăнать.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, эсир качака мĕнле макăрнине пĕлетĕр-и?
А ч а с е м. Ме-е, ме-е!
В о с п и т а т е л ь.

Урипе тапсассăн тăр-рăст!
Çилленсе хăйне кура –
Çăварна карса ан тăр эс:
Кĕç кăтартĕ мыскара.

Воспитатель ачасене хăй хыççăн ертсе пырать. Ачасем çăмăллăн сиккелесе утаççĕ.

В о с п и т а т е л ь.

Вăл сана пырса сĕкесшĕн
Малалла пĕррех сикет.
Те пăртакçă вăй виçесшĕн,
Те шӳтлесшĕн, кам пĕлет?..

(Петĕр Çăлкуç. «Мыскараçă качака»)

Воспитательпе ачасем мӑйракасем туса кӑтартаҫҫӗ, урисемпе тӑпӑртатаҫҫӗ.
Воспитатель чакак (тетте) илет.
«Чакак, чакак» инсценировка ирттереҫҫӗ.

В о с п и т а т е л ь.

Чакак, чакак
Пӑтӑ пӗҫернӗ,
Чӗпписене ҫитернӗ (*ал тупанне пӳрнипе сӑтӑрать*).

Ч а к а к *(хӗр ача).*

Ҫакна панӑ,
Ҫакна панӑ,
Ҫакна панӑ,
Ҫакна панӑ (*ывӑҫ тупанӗ ҫине пӑтӑ хунӑ пек туса кӑтартать*).
Кӑна вара – ҫук (*пӳрнепе юнать*)!

В о с п и т а т е л ь.

Эсӗ шыв йӑтман,
Вутӑ ҫурман,
Пӑтӑ пӗҫермен –
Сан валли нимӗн те ҫук (*аллисене икӗ еннелле сарать, кастрюле илсе сӗтел ҫине лартать*)!
Кам пӑтӑ ҫимест,
Ҫавна качака ҫиет!

Воспитатель «Мӑйракаллӑ  качака пырать» вӑйӑ ирттерет.

В о с п и т а т е л ь.

Шурӑ сухал, мӑйрака.
Тӑра парать качака!
Урипе тӑп! тӑп! тапать,
Куҫӗпе мӑч! мӑч! тӑвать.
Тарӑхса ҫапла калать:
– Кам пӑтӑ ҫимест,
Сӗт ӗҫмест –
Ме-ке-кек!
Ме-ке-кек!
Тӗкетӗп (*воспитатель «мӑйракасем» туса ачасене хӑратнӑ пек тӑвать*)!

А ч а с е м.

Качакаçăм, эс ан хăрат,
Ăшă сĕт пире парсам!

Воспитатель «сĕт ярса парать» (сăнарласа кăтартать).
Хаваслă юрă янрать, ачасем ирĕклĕ ташă ташлаççĕ.

## *3-мĕш вăйă.* **Вăрманта**

***Тĕллевсем:*** ачасене вăйă лару-тăрăвне явăçтарасси, юмаха тимлĕн итлеме, сюжет аталанăвне сăнама, сăнарсене ăнланма вĕрентесси, хурав пама хавхалантарасси.

***Кăтарту хатĕрĕсем*:** вăрманти тискер кайăксене, мулкачсене, упасене сăнласа памалли аудиоçырусем; «Вăрманти сасăсем» спектакль валли ўкерчĕксем.

***Ытти ĕç-хĕлпе çыхăнни:*** музыка, экологи, пуплев аталанăвĕ.

В ă й ă   ю х ă м ĕ

Воспитатель ачасене вăрмана уçăлса çўреме чĕнет. Ачасем Г. Гриневичăн «Ир» музыкипе утаççĕ. Воспитатель вăрманта мĕн тĕл пулма пултарни çинчен ыйтать. Ачасен хуравĕсене итлесе пĕтерсен «Мулкач» вырăс халăх кĕввине итлеме сĕнет, ачасене хускануллă сăнарсем тума явăçтарать.
Ачасем воспитатель хавхалантарнипе ĕçлеççĕ: «Мулкач пек сикĕр» (аллисене кăкăр умне тытса çăмăллăн сикеççĕ).
«Упа çурисем» музыка сăнарĕ (Е. Тиличеева «Упа»).
Ачасем упа çурисем пек хускалаççĕ (аллисене айккинелле сарса, енчен енне сулкаланса, кăнттаммăн утаççĕ).
Воспитатель ачасене вăрманти картинăсен театрне «Вăрманти тискер кайăксем» спектакле йыхравлать.
Воспитатель вăрманта пурăнакан чĕр чунсен сассисене евĕрлесе ўкерчĕк çинче кăтартнă май вĕсем çинчен каласа парать. Кашни ўкерчĕк çинче пĕр вăхăтрах 1–2 сăнар пулма пултарать. Сăнарсем (Рум упа çури, Рым упа çури, упа ами, хурт-хăмăр).

В о с п и т а т е л ь. Вăрманта икĕ упа çури пурăннă. Пĕрне Рум, тепĕрне Рым тесе чĕннĕ. Рум туратсене кăшлама юратнă. Вăрманта: «Рум-рум!» – тени илтĕнсе тăнă. Рым вăрăммăн мĕкĕрме юратнă: «Р-р-рым!» Пĕррехинче Румпа Рым хăмла çырли çиме кайнă. Хăмла çырли тĕммисем патне çывхарсан: «З-з-з!» – тенине илтеççĕ упа çурисем. «Кам ку?» – тесе ыйтать Рум. «Пĕлместĕп», – хуравлать Рым. Упа çурисем хăмла çырли пуçтарма пуçлаççĕ. Сасартăк каллех: «З-з-з!» – тени илтĕнет. Упа çу-

рисем хăйсен сăмсисене тĕмсем ăшнерех чикеççĕ. «Ай!» – тесе кăшкăрса ярать Рум, унтан аяккалла чупса тарать. Рым, нимĕн те пулман пек, хăмла çырли çиет, анчах та вăл хăйне такам сăмсинчен хытă чĕпĕтнĕ пек туять. Сăмси ыратма пуçăнать. «Ай!» – тесе кăшкăрса ярать те Рым чупса тарать. Упа çурисем хашкаса килелле чупса çитеççĕ.

Амăшĕ вĕсене ачашшăн кĕтсе илет те çапла калать: «Савнă упа çурисем, Румпа Рым, эпĕ эсир хăмла çырлине юратнине пĕлетĕп. Эсир сăмсăрсене хăмла çырли сĕткенĕпе вараланă, çавăнпа сире пыл хурчĕсем асăрханă та!»

Çапла вара упа çурисем хăмла çырлине вĕсем кăна мар, пыл хурчĕсем те юратнине пĕлнĕ.

Воспитатель ачасенчен юмах килĕшнипе килĕшменни çинчен ыйтать; Рум туратсемпе мĕнле шатăртатнине, Рым мĕнлерех мĕкĕрнине, хуртсем епле сĕрленине, упа çурисем ыратнипе еплерех кăшкăрашнине туса кăтартма ыйтать.

## *4-мĕш вăйă.* **Аслă уйра керменкке ларать**

***Тĕллевсем:*** ачасене театр ĕçне явăçтарасси; спектакль сюжетне сăнама вĕрентесси; вăйă пуçарасси.

***Кăтарту хатĕрĕсем*:** вырăс халăх тумĕ; вырăс халăхĕн пӳрт-çуртри япалисем (лавккасем, сăмавар, сĕтел çитти тата ытти те); сĕтел çинчи театрта вылякансем (шăши, шапа, мулкач, тилĕ, кашкăр, упа).

***Ытти ĕç-хĕлпе çыхăнни:*** музыка, илемлĕ литература, пуплев аталанăвĕ.

В ă й ă ю х ă м ĕ

Вырăс халăх тумне тăхăннă воспитатель ачасене вырăс халăх стилĕпе тирпейленĕ пӳлĕме йыхравлать. Ачасем сак çине лараççĕ.

В о с п и т а т е л ь.

Уйра керменкке ларать,
Мăрйинчен тĕтĕм тухать.
Керменккене кĕрсемĕр,
Тĕпелелле иртсемĕр.
Юмах ярăп, юптарăп,
Пĕтĕмпех каласа парăп.

Ачасем, паян эпĕ сире керменкке çинчен каласа парăп.

Ачасене вырăс халăхĕн «Керменкке» юмахĕпе лартнă спектакль курма сĕнет. "Уйра керменкке ларать" кĕвĕ янăрать.

Е р т с е  п ы р а к а н (в о с п и т а т е л ь).

Аслă уйра керменкке, керменкке,
Пысăк та мар керменкке, керменкке,
Пĕчĕк те мар керменкке, керменкке.
Керменккере мĕн-мĕн пурăнать?

Никам та сас памасть. Уй тăрăх шăши чупать, керменкке патне пырса тухать.

Ш ă ш и.

Аслă уйра керменкке, керменкке,
Пысăк та мар керменкке, керменкке,
Пĕчĕк те мар керменкке, керменкке.
*(Шаккать.)* Керменккере мĕн-мĕн пурăнать?
*(Тĕлĕнсе.)* Никам та çук...
Эпĕ, пĕчĕкçĕ шăши,
Уйра чупатăп,
Хама валли пурăнма
Керменкке шыратăп.
Акă тупрăм, кĕрес *(шăши керменккере пурăнма пуçлать).*

Е р т с е  п ы р а к а н.

Аслă уйра керменкке, керменкке,
Пысăк та мар керменкке, керменкке,
Пĕчĕк те мар керменкке, керменкке.
Акă уйпа сип-симĕс шапа сикет,
Керменккене курах каять.

Ш а п а *(шаккать).* Керменккере мĕн-мĕн пурăнать?

Ш ă ш и. Эпĕ шăши. Эсĕ кам?

Ш а п а. Эпĕ шапа, ква-ква-ква.

Ш ă ш и. Кĕр, пĕрле пурăнар!

Е р т с е  п ы р а к а н. Вĕсем иккĕн пурăнма пуçлаççĕ. Сасартăк вăрмантан мулкач сиксе тухать. Керменкке патне сиксе пырать.

М у л к а ч *(шаккать).* Керменккере мĕн-мĕн пурăнать?

Ш ă ш и. Эпĕ шăши.

Ш а п а. Эпĕ шапа, ква-ква-ква. Эсĕ кам?

М у л к а ч. Эпĕ куян тус.

Ш ă ш и. Кĕр, пĕрле пурăнар!

Е р т с е  п ы р а к а н. Вĕсем виççĕн пурăнма пуçлаççĕ. Керменкке патне тилĕ чупса пырать.

Т и л ĕ *(шаккать).* Керменккере мĕн-мĕн пурăнать?

Ш ă ш и. Эпĕ шăши.

Ш а п а. Эпĕ шапа, ква-ква-ква.

М у л к а ч. Эпĕ куян тус. Эсĕ кам?

Т и л ĕ. Эпĕ чее тилĕ.

Ш ă ш и. Кĕр, пĕрле пурăнар!

Е р т с е п ы р а к а н. Вĕсем тăваттăн пурăнма пуçлаççĕ. Акă уй тăрăх кашкăр чупать.

К а ш к ă р *(шаккать).* Керменккере мĕн-мĕн пурăнать?

Ш ă ш и. Эпĕ шăши.

Ш а п а. Эпĕ шапа, ква-ква-ква.

М у л к а ч. Эпĕ куян тус.

Т и л ĕ. Эпĕ чее тилĕ. Эсĕ кам?

К а ш к ă р. Эпĕ кашкăр-кашаман.

Ш ă ш и. Кĕр, пĕрле пурăнар!

Е р т с е п ы р а к а н. Уйпа упа-утаман пырать.

У п а *(шаккать).* Керменккере мĕн-мĕн пурăнать?

Ш ă ш и. Эпĕ шăши.

Ш а п а. Эпĕ шапа, ква-ква-ква.

М у л к а ч. Эпĕ куян тус.

Т и л ĕ. Эпĕ чее тилĕ.

К а ш к ă р. Эпĕ кашкăр-кашаман. Эсĕ кам?

У п а. Эпĕ упа-утаман.

Ш ă ш и. Кĕр, пĕрле пурăнар!

У п а. Эпĕ унта кĕрейместĕп, керменкке тăрринче пурăнсан лайăххах пулĕ.

Е р т с е п ы р а к а н. Упа çӳле хăпарса каять те керменккене лапчăтса хурать. Чĕр чунсем сиксе тухаççĕ, хуйхăраççĕ, анчах нимĕн те тума çук. Вара çĕнĕ çурт тума пуçлаççĕ, унчченхинчен çирĕпрех туса лартаççĕ.

Воспитатель ачасенчен юмах килĕшнипе килĕшменни çинчен ыйтать.
Унтан ачасемпе пĕрле юрă юрлаççĕ.

В о с п и т а т е л ь п е а ч а с е м.

Аслă уйра керменкке, керменкке,
Пысăк та мар керменкке, керменкке,
Пĕчĕк те мар керменкке, керменкке *(ачасем пĕр-пĕрин хыççăн пыраççĕ).*
Унта чĕр чунсем пурăнаççĕ, пурăнаççĕ,
Пăтă пĕçереççĕ, хăмла çырлипе чей ĕçеççĕ *(ачасем ал çупса ташлаççĕ).*

Воспитатель ыйтусем парать, ачасем керменккере мĕнле чĕр чунсем пурăннине калаççĕ.

## Раштав уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем

### *1-мĕш вăйă.* Пуканесем патĕнче хăнара

***Тĕллевсем:*** тĕс туйăмне аталантарасси, вăйăлла ситуацире ырри çинчен пĕлтересси, хускануллă лару-тăрăва хутшăнтарасси.

***Кăтарту хатĕрĕсем*:** тĕрлĕ тĕслĕ кĕпе тăхăннă пуканесем, упа çури (тетте), тĕрлĕ тĕслĕ чашăксем.

***Ытти ĕç-хĕлпе çыхăнни:*** музыка, илемлĕ литература, пуплев аталанăвĕ.

В ă й ă  ю х ă м ĕ

Воспитатель ачасене пуканесем патне хăнана чĕнет.

В о с п и т а т е л ь. Пуканесем сĕтел хушшинче тĕл пулнă. Кашни пуканен хăйĕн чашăкĕ. Кăвак чашăкран Соня ятлă пукане чей ĕçет, унăн кăвак кĕпе (*юнашар тăракан ачана чĕнет*). Лена, тархасшăн, Соньăна чей ярса парсам. Хĕрлĕ чашăкран Зина ятлă пукане чей ĕçет, унăн хĕрлĕ кĕпе *(юнашар тăракан ачана чĕнет).* Женя, тархасшăн, Зинăна чей ярса пар. Сарă чашăкран Катя ятлă пукане чей ĕçет, унăн сарă кĕпе *(юнашар тăракан ачана чĕнет).* Маша, тархасшăн Катьăна чей ярса парсам. Пуканесем патне хăнана Миша упа çури килнĕ. Мишăна сĕтел хушшине лартнă. Ăна симĕс чашăк панă, йĕмĕпе пĕр тĕслине *(ачасене чашăк кăтартать).* Хитре чашăк (*упа çурине чей ярса парать).* Упа çурипе пуканесем чей ĕçеççĕ, мухтаççĕ.

В о с п и т а т е л ь (*Соня ятлă пуканен чашăкне алла илет*).

Кăвак чашăкра чей, чей,
Ĕç, юлташăм, тунсăхран.

В о с п и т а т е л ь  (*Зина ятлă пуканен хĕрлĕ чашăкне алла илет).*

Хĕрлĕ чашăк пит хитре,
Зинăн чейĕ питĕ тутлă.

В о с п и т а т е л ь (*Катя ятлă пуканен сарă чашăкне алла илет*).

Сар чашăкри чей аван,
Ун пеккине тата ăçта тупан.

В о с п и т а т е л ь (*Миша упа çурин симĕс чашăкне алла илет*).

Пылак чейпе хăналатпăр
Хаклă кĕтнĕ хăнана,
Миша симĕс чашăкран
Чей ĕçет сушкăпала.

Музыка вылять, пуканесемпе вĕсен хăнисем ташлама тухаççĕ
(ачасем пуканесене илеççĕ те вĕсемпе ташлама тухаççĕ).
Ташă хыççăн воспитатель ачасене пуканесене хăйсен чашăкĕсене хирĕç лартма сĕнет.

## *2-мĕш вăйă.* **Лашасем юр тăрăх чупаççĕ**

***Тĕллевсем:*** ачасене импровизаци хусканăвĕсем тума хистесси, интонациллĕ сасă палăрăмлăхне аталантарасси.

***Кăтарту хатĕрĕсем*:** лаша (тетте).

***Ытти ĕç-хĕлпе çыхăнни:*** музыка, пуплев аталанăвĕ.

В ă й ă ю х ă м ĕ

Воспитатель ушкăна лаша илсе килет те ăна ачасене юр тăрăх ярăнтарма сĕнет. Ачасем ушкăнпа тăраççĕ, аллисене малалла тăсаççĕ («чĕлпĕр тытаççĕ») те сиккипе чупса çӳреççĕ.

В о с п и т а т е л ь (*аллине «лаша» тытнă*).

Юрататăп лашине,
Шав туратăп çилхине.
Эп ăна кĕç йĕвенлетĕп,
Хăнана кайса килетĕп.
(Агния Барто)

Ачасем чарăнаççĕ.

В о с п и т а т е л ь.

Малалла – юр тарăн,
Малалла – çул инçе.
Пурте çуран, çуран…

Ачасем малалла «юр тăрăх» утаççĕ.

В о с п и т а т е л ь.

Çунасемпе – çил евĕр!

Ачасем чĕркуççисене кăшт хутлатса, аллăсене малалла тăсса «çунасемпе ярăнаççĕ». Воспитатель ачасене лашана шеллеме сĕнет, чарăнса кантарма ыйтать. Ачасем лаша патне пырса ăна ачашлаççĕ, ачаш сăмахсем калаççĕ. Лаша апат ыйтать. Ачасем лашана çитереççĕ.

В о с п и т а т е л ь.

Ачасем, выляр-и тытмалла?
Кам манпа чупать ăмăртмалла?
Атьăр, хуса çитĕр хăвăртрах.
Курччăр пурте, кам маттуртарах?
( Юхма Мишши)

Тытмалла выляççĕ.

## *3-мĕш вăйă.* **Юр пĕрчисем вĕçеççĕ**

***Тĕллевсем:*** ритм туйăмне аталантарасси, интонаципе усă курасси, палланă юмаха каласа пама вĕрентесси, ачасен хускану активлăхне аталантарасси.

***Кăтарту хатĕрĕсем*:** теттесем – «Керменкке» юмахри сăнарсем.

***Ытти ĕç-хĕлпе çыхăнни*:** музыка, илемлĕ литература, пуплев аталанăвĕ.

В ă й ă  ю х ă м ĕ

Воспитатель ачасене хĕллехи уçланкăна чĕнет. Вальс кĕвви янăрать. Воспитатель ачасене юр пĕрчисем пек çаврăнма сĕнет. Ачасем ирĕккĕн ташлаççĕ. «Юр пĕрчисем ӳкеççĕ» хускануллă импровизациллĕ вăйă иртттереççĕ.

В о с п и т а т е л ь.

Юр çĕр каçипех вĕçтерчĕ
Мамăк евĕр ярăнса (*ачасем «юр пĕрчисем» «вĕçеççĕ»*),
Хĕл çитни çинчен систерчĕ
Парăс евĕр хупласа.
(Светлана Гордеева)

Воспитатель ачасене çил-тăман сассине итлеме сĕнет. «Çил-тăман мĕнле улать?» интонациллĕ вăйă иртттереççĕ.

В о с п и т а т е л ь *(хаяррăн).*

Çилĕн хапхи уçăлсан
Асар-писер çил-тăман
Сиксе тухать тепĕр чух:
– У-у-у!
Сĕм вăрманта тулашать,
Аслă уйра аташать.

А ч а с е м *(хыттăн).* У-у-у!

В о с п и т а т е л ь.

Мĕнпур çиллĕ тăмана,
Айĕн-çийĕн тустарса,
У-у-у!
Яла килет кустарса.
(Илле Тăхти)

А ч а с е м *(шăппăн).* У-у-у!

Воспитатель ачасене палланă «Керменкке» юмаха аса илме сĕнет.

Воспитатель ыйтăвĕсем пулăшнипе ачасем юмахри тĕп геройсене аса илеççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ: «Керменкке ăçта тăнă? Хир тăрăх малтан кам чупса пынă? Кайран кам пынă? Юмах вĕçĕнче мĕн пулса тухнă?»

## *4-мĕш вăйă.* Чĕр чунсем Çĕнĕ çула кĕтсе илеççĕ

***Тĕллевсем:*** ачасене Çĕнĕ çул уявне хатĕрленме явăçтарасси, спектакль сюжетне йĕрлесе пыма вĕрентесси, ырă туйăмсем вăратасси.

***Кăтарту хатĕрĕсем*:** чăрăш, бибабо пуканисем (куян, кашкăр, тилĕ, пакша).

***Ытти ĕç-хĕлпе çыхăнни*:** музыка.

Асăрхаттару: бибабо пукани – алă çине тăхăнтармалли ансат пукане.

В ă й ă   ю х ă м ĕ

Воспитатель ачасене капăрлатнă чăрăш патне илсе пырать те ыйтать: «Ачасем, пĕлетĕр-и, часах Çĕнĕ çул уявĕ пулать?». Ачасене вăрманти чĕр чунсем Çĕнĕ çула мĕнле хатĕрленнине пăхма сĕнет. Бибабо пукане театрĕ «Вăрманти Çĕнĕ çул» кăтартать.

П а к ш а.

Акă çитрĕç хăнасем,  
Кĕтсе илĕр, юлташсем!  
Тилĕ, компот тултарсам,  
Куян, кишĕр тутансам!

К а ш к ă р.

Çĕнĕ çул çитнĕ пуль тесе  
Эп кĕтмерĕм чĕнессе.  
Пĕр карçинкка пан улми  
Илсе килтĕм сан валли.

П а к ш а.

Хăна-вĕрле пухăнать,  
Уяв çитнĕн туйăнать.  
Кашкăр, вăртах, ална пар,  
Халь малалла иртсе лар!

Т и л ĕ.

Симĕс чăрăш айĕнче  
Ытла та аван тĕнче!  
Ним те çиес килмест ман, –  
Питĕ хитре сĕм вăрман.

П а к ш а.

Куян тусăм, кил кунта,
Мĕскер тăван эс унта?
Уяв чух савăнмалла,
Пурте пĕрле пулмалла!
(Лидия Сарине. «Вăрманти уяв»)

Воспитатель ачасене чăрăш çинчен юрă аса илсе ăна юрлама сĕнет.

## Кăрлач уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем

### *1-мĕш вăйă.* **Чăрăш юрри**

***Тĕллевсем:*** ачасене Çĕнĕ çул уявне явăçтарасси, эстетика туйăмне аталантарасси, ирĕккĕн ташлама хавхалантарасси.

***Кăтарту хатĕрĕсем*:** илемлетнĕ Çĕнĕ çул чăрăшĕ, чăрăш теттисем (пăру, хунар, хăмпă, Хĕл мучи).

***Ытти ĕç-хĕлпе çыхăнни:*** музыка, илемлĕ литература, пуплев аталанăвĕ.

В ă й ă   ю х ă м ĕ

Воспитатель ачасене илемлетнĕ чăрăш çине тимлĕ пăхма, ăна мĕнле уяв валли капăрлатнине аса илме сĕнет. Чăрăш çинчи теттесене кăтартать те вĕсем те Çĕнĕ çул уявĕнче пулни çинчен пĕлтерет. Теттесен калаçăвне итлеме сĕнет. Воспитатель теттесене чăрăш çинчен пĕрерĕн илет те ачасене кăтартать.

В о с п и т а т е л ь.

Хире те юр шуратнă,
Садра та шурă юр.
Пӳртре çеç лăс туратлă
Сип-симĕс чăрăш пур.
Ытарайми пăхатпăр
Эпир ăна кунта.
Епле иккен пит капăр
Çипуçĕ Çĕн çулта.
(Александр Алка)

Чăрăш çинче çакăнса тăракан теттене кăтартать.

Чăрăш çинче, курăр,
Пĕчĕк пăру пур.

Чăрăш çинчен теттене илет.

В о с п и т а т е л ь.

Ку ĕне – ман анне,
Анчах та ун сĕтне
Ĕçтермеççĕ мана,
Ĕçтереççĕ сана.
(Юхма Мишши)
Пăру хунара курать,
Хитре шарике сăнать (*чăрăш çинчен хунар илет*).
Чăрăш çинчи хунар
Пăрăва илĕртет аякран:
– Ан хăра эс манран, – тесе
Кăвак çутă туртать хăй патне.

В о с п и т а т е л ь (*чăрăш çинчен тетте-хăмпă илет*).

Шарик те пăрăва килĕшет,
Унăн пĕчĕк мăйракисем
Мĕлтлететеççĕ шарикре.
Пĕчĕк-пĕчĕк шариксем
Ялкăшаççĕ аякран.
Пĕчĕк-пĕчĕк шариксем
Илĕртеççĕ кашнине.

В о с п и т а т е л ь (*чăрăш çинчен Хĕл мучи теттене илет, Борис Борлен сăввине кăшт улăштарса калать*).

Хĕллехи вăхăтра
Пухăннă эпир кунта.
Симĕс чăрăш питĕ капăр.
Хĕл мучи çинчен юрлатпăр.
Ырăскер ачасене
Кашнинех парать парне.

Воспитатель ачасене вăрманти чĕр чунсем Çĕнĕ çула мĕнле хатĕрленнине аса илме сĕнет. Ыйтусем парать: «Чĕр чунсем мĕнле уяв кĕтсе илнĕ? Чăрăш йĕри-тавра вăрманта кам пулнă? Чĕр чунсем мĕн тунă? Кашкăр мĕнле кучченеç илсе килнĕ?» Воспитатель ачасене чăрăш йĕри-тавра тăрса илемлĕ ташă ташлама сĕнет.

## *2-мĕш вăйă.* **Йĕкелсем**

***Тĕллевсем:*** ачасене юмах сюжетне тăнлама, паллană юмах тăрăх ыйтусене хуравлама вĕрентесси, импровизацилеме хистесси.

***Кăтарту хатĕрĕсем*:** йĕкелсем.

***Ытти ĕç-хĕлпе çыхăнни:*** музыка, пуплев аталанăвĕ, физкультура аталанăвĕ.

В ă й ă  ю х ă м ĕ

Воспитатель ушкăна ачасемпе урамра уçăлса çӳренĕ чухне пуçтарнă чăрăш (хыр) йĕкелĕсене илсе килет. Ачасемпе пысăк тата пĕчĕк йĕкелсене суйлаççĕ: ку йĕкелсем – ачисем, ку йĕкелсем – ашшĕ-амăшĕ. Воспитательпе ачасем пĕрле йĕкелсем çинчен юмах шутласа тупаççĕ.
Воспитатель йĕкелсем çинчен юмах каласа парать.

В о с п и т а т е л ь. Пурăннă тет йĕкелсем. Вĕсем çӳллĕ чăрăш çинче çакăнса тăнă. Йĕкелсем çил çинче çапла ярăнса тăнă. *(Воспитатель йĕкелсене алăра ярăнтарать.)* Йĕри-тавра мĕн пулса иртнине йĕкелсем пĕтĕмпех курса тăнă. Акă чăрăш айĕнчен мулкач чупса иртет. *(Ачасем мулкачсем пек сикеççĕ.)* Акă тата хӳрипе сулса чее тилĕ чупса иртет. *(Ачасем аллисемпе тилĕ хӳри кăтартса çăмăллăн чупаççĕ.)* Упа-утаман та кунтах иккен. *(Ачасем упа пек утаççĕ.)* Йĕкелсем ярăннă-ярăннă та сасартăк ӳкме пуçланă. Хăвăлтан пакша сăмсине кăларса пăхнă. Турат çинчен сиксе аннă та йĕкеле ярса та тытнă. Вара ăна хăйĕн хăвăлне кайса хунă. Кайран тата тепре, унтан татах. Пакша йĕкелсене кĕлете пуçтарса хунă. Халĕ вĕсем унта выртаççĕ. Пакши вара пĕр йĕкелне илет те, тĕшшине кăларать те кăшлать. Тутлă!

Воспитатель ачасене юмах килĕшнĕ е килĕшменнипе интересленет, ыйтусем парать: «Йĕкелсем ăçта ӳснĕ? Чăрăш айĕпе кам чупса иртнĕ? Мулкач мĕнле чупса иртнĕ? Тилĕ мĕнле чупса иртнĕ? Упа мĕнле утса пынă? Йĕкелсене кам хăвăла пуçтарса хунă? Халĕ йĕкелсем ăçта выртаççĕ? Пакша йĕкелсенче мĕн тупать?»
«Турат çинчи йĕкелсем» хускануллă импровизаци.

В о с п и т а т е л ь.

Турат çинчи йĕкелсем –
Пĕчĕкçеççĕ ачасем.
Пире курсан йăл! кулаççĕ,
Турат çинче ярăнаççĕ.

Ачасем енчен енне тайăлаççĕ, аллисем пилĕк çинче.

В о с п и т а т е л ь.

Кĕтмен çĕртен йĕкелсем
Вырăнтан хускалнă,
Сике-сике сывлăшра
Çĕр çине тăкăннă.

Ачасем сикеççĕ.

В о с п и т а т е л ь.

Кусса кайнă йĕкелсем,
Пĕчĕкçеççĕ ачасем,
Вăрман витĕр тĕм айне,
Мулкач шăтăкĕ патне.

Ачасем пĕр-пĕрин хыççăн чупаççĕ.

В о с п и т а т е л ь.

Мулкач кайнă тарăхса,
Тарнă, тарнă хăраса.

Ачасем мулкачсем пек сикеççĕ.

## *3-мĕш вăйă.* Çунашкасемпе ярăнни

***Тĕллевсем:*** ачасене сассăн тĕрлĕ интонацийĕ пирки пĕлтересси, сюжетпа ĕç-хĕле шайлаштарма вĕрентесси.

***Кăтарту хатĕрĕсем*****:** çунашкасем, пуканесем.

***Ытти ĕç-хĕлпе çыхăнни:*** музыка, пуплев аталанăвĕ.

В ă й ă  ю х ă м ĕ

Воспитатель ачасене чӳрече патне илсе пырать. Чӳречерен юр айне пулнă ача сачĕн уçăлса çӳремелли лаптăкĕ курăнать. Пурте пĕрле чӳречерен урамри çанталăка сăнаççĕ. Воспитатель ачасене çунашка кăтартать, ăна пуканепе юнашар хурать.

В о с п и т а т е л ь.

Манăн çĕнĕ çунашка
Çил çунатлă (*ачасене çунашка кăтартать*),
Ту çинчен пит аякка
Ыткăнать вăл (*çунашка ярăннă пек туса
кăтартать*).
Анчах тĕлсĕр ярăнсан
Инкек мар-и?

Çунашкам ман ăнсăртран
Ванчĕ кайрĕ (*çунашканана тӳнтерсе ярать*).
(Александр Кăлкан)

Воспитатель ачасене пуканесене алла илсе «çунашкасем çине ларса ярăнма» сĕнет (ачасем «Валенки» вырăс халăх кĕввипе хусканусем пурнăçлаççĕ). Ачасем сăрт çинчен çунашкапа ярăннă пек хусканусем тăваççĕ.

В о с п и т а т е л ь.

Лапка-лапка юр çăвать,
Хура çĕре шуратать.
Çунашкапа ярăнма
Пур ача та юратать.
Çӳл ту çине улăхар,
Вĕçтерер-и улăха.
Каç пуличчен ярăнар,
Шурă юрпа савăнар.
(Александр Алка)

## *4-мĕш вăйă.* Вăрманти сукмак çинче

***Тĕллевсем**:* илемлĕх туйăмне аталантарасси, хускануллă импровизаци тума хистесси, калаçăва аталантарасси.

***Кăтарту хатĕрĕсем***: хĕллехи вăрмана сăнлакан ӳкерчĕк. Ӳкерчĕксем: кашкăр çурипе мулкач çури выляççĕ, кашкăр ами çури çине тарăхнă, мулкач ами çури çине тарăхнă, мулкач çури кашкăр çуринчен тарать.

***Ытти ĕç-хĕлпе çыхăнни:*** музыка, илемлĕ литература, пуплев аталанăвĕ, сăнарлă ӳнер.

В ă й ă   ю х ă м ĕ

Воспитатель ачасене хĕллехи вăрмана чĕнет. Илемлĕ музыка вылять. Педагог ачасене хĕллехи пейзаж сăнлакан ӳкерчĕк кăтартать, унпа киленме сĕнет. «Вăрманта юр питĕ тарăн, иртме çук. Юр таптаса сукмак тумалла», – тет ачасене. Ачасем аллисене пилĕк çинче тытса воспитатель хыççăн «сукмак таптаççĕ». «Сукмак таптатпăр» хускану вăййи.

В о с п и т а т е л ь.

Тап-тап, тап-тап,
Тап-тап, тап-тап!

Ачасем пĕр вырăнта ура тапса тăраççĕ.

В о с п и т а т е л ь.

Пирĕн пĕчĕк урасем
Сукмак тăрăх чупаççĕ.

Ачасем ура тапса малалла куçаççĕ.

В о с п и т а т е л ь.

Тап-тап, тап-тап,
Тап-тап, тап-тап!

Ачасем пĕр вырăнта ура тапса тăраççĕ.

В о с п и т а т е л ь.

Эпир пĕчĕккĕн утсах
Якатрăмăр сукмака.

Ачасем урисене çӳллĕ çĕклесе утаççĕ.

А ч а с е м.

Кĕске хӳре мулкачсем,
Чее куçлă тилĕсем,
Чупăр яка сукмакпа,
Эпир таптанă çулпа.

Вăйă вĕçĕнче «мулкачсем» сикмелли, тилĕсем чупмалли музыка янăрать. Воспитатель ачасене ӳкерчĕксен театрĕнче Г. Науменко хатĕрленĕ «Мулкач çурипе кашкăр çури» вырăс халăх юмахне пăхма сĕнет. Пĕтĕм рольсене воспитатель вылять. Кайран ку юмаха театрăн урăх тĕсĕсенче тепĕр хут выляма пулать (сĕтел çинчи театр, бибабо, теттесем).

Е р т с е  п ы р а к а н. Вăрманта мулкач çурипе кашкăр çури тĕл пулнă тет. Вĕсем кунĕпе вылянă, сикнĕ, чупнă. Каçхине кашкăр çури килне килсен амăшне каласа панă…

К а ш к ă р  ç у р и. Эпĕ паян кунĕпе ман сăнлă кашкăр çурипе вылярăм, чупрăм, сикрĕм.

Е р т с е  п ы р а к а н. Кашкăр амăшĕ ыйтать…

К а ш к ă р  а м ă ш ĕ. Мĕнлескер вăл?

Е р т с е  п ы р а к а н. Кашкăр çури юрласа янă…

К а ш к ă р  ç у р и (*юрлать*).

Шурăскер, пĕчĕкскер,
Унăн тумĕ мамăк пек.
Хăлхи вăрăм, куçĕ чалăш,
Чупать çулăм пек.

К а ш к ă р а м ă ш ĕ. Вăл кĕске хӳреллĕ мулкачсен ывăлĕ мар-и-ха? Эпир вĕсене тытатпăр та çиетпĕр. Тепрехинче мулкач çурине курсанах хыçалтан йăпшăнса пыр та ярса тыт.

Е р т с е п ы р а к а н. Мулкач çури те килне килнĕ те амăшне каласа панă…

М у л к а ч ç у р и. Эпĕ паян кунĕпе ман сăнлă мулкач çурипе вылярăм, чупрăм, сикрĕм.

Е р т с е п ы р а к а н. Мулкач амăшĕ ыйтать…

М у л к а ч а м ă ш ĕ. Мĕнлескер вăл?

Е р т с е п ы р а к а н. Мулкач çури юрласа янă…

М у л к а ч ç у р и (*юрлать*).

Сăрăскер, шăллăскер,
Вăрăм сăмса, кукăр хӳре…

М у л к а ч а м ă ш ĕ. Вăл вăрăм хӳреллĕ кашкăрсен ывăлĕ мар-и-ха? Вĕсем пирĕн тăшмансем, пире тытаççĕ, çиеççĕ. Тепрехинче кашкăр çурине курсанах тар унран.

Е р т с е п ы р а к а н. Тепĕр кунне кашкăр çури мулкач çурине курнă.

К а ш к ă р ç у р и. Тусăм, кил, пĕрле вылятпăр.

Е р т с е п ы р а к а н. Анчах та мулкач çури кашкăр çуринчен сиккипе сăрт çине, сăрт çинчен кутăн-пуçăн çаврăнса пăхмасăр килелле чуптарнă. Çапла вĕçленнĕ вĕсен туслăхĕ.

Юмах вĕçленсен воспитатель ачасенчен юмах килĕшнипе килĕшменнине ыйтса пĕлет.

## Нарăс уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем

### *1-мĕш вăйă.* Кăмакари кулачсем

***Тĕллевсем:*** ачасене чăваш халăх пултарулăхĕпе паллаштарасси, палланă юмаха каласа парас ĕçе хутшăнтарасси, хусканullă вăййа хутшăнма хистесси.

***Кăтарту хатĕрĕсем*:** чăх (тетте), чăваш кил-çуртне сăнлакан япаласем, чăваш халăх костюмĕ.

***Ытти ĕç-хĕлпе çыхăнни***: музыка, илемлĕ литература, пуплев аталанăвĕ.

## В ă й ă   ю х ă м ĕ

Воспитатель ачасене чăваш йăли-йĕркипе тирпейленĕ пӳлĕме илсе кĕрет, пӳлĕм варринче маччаран сăпка çакăнса тăрать. Сăпкара пукане выртать.

В о с п и т а т е л ь (*пуканене алла илет те ярăнтарать*).

Ачине – паппине,
Лаптăк, лаптăк сăпкине.
Ашшĕ кайнă пасара,
Кулач илсе килет-ха,
Амăш кайнă çырлана,
Паппа ту, паппа ту,
Няня çинче паппа ту.
Ачасем, кулач çиес килет-и?

Ачасем аллисене тăсаççĕ. Воспитатель вĕсене «кулач валеçсе парать».

В о с п и т а т е л ь.

Хĕвел, тух, хĕвел, тух!
Ачу шыва кайнă тет.
Турчăкупа туртса ил,
Милкӳпелен шăлса ил.

В о с п и т а т е л ь. Манăн кăмака хыçĕнче чăх пурăнать. Пĕррехинче чăх çăмарта тунă. Çăмарти ахалли мар – ылтăн *(ачасене çăмарта кăтартать)*. Ку юмаха пĕлетĕр-и, ачасем? Атьăр пĕрле каласа паратпăр. Малалла мĕн пулнă? Асатте çăмартана çапнă-çапнă…

А ч а с е м. Çĕмĕреймен…

В о с п и т а т е л ь. Асанне çапнă-çапнă…

А ч а с е м. Çĕмĕреймен…

В о с п и т а т е л ь. Çăмартана кам çĕмĕрнĕ?

А ч а с е м. Шăши.

В о с п и т а т е л ь. Тĕрĕс. Шăши чупса пынă, хӳрипе сулнă, çăмарта ӳкнĕ те çĕмĕрĕлнĕ. Асаннепе асатте…

А ч а с е м. Йĕреççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Чăххи кăтиклетет тет: «Ан йĕр, асатте, ан йĕр, асанне. Эпĕ сире тепĕр çăмарта туса паратăп, ылтăнни мар…».

А ч а с е м. Ахальли.

Воспитатель пӳлĕм варрине автан теттене лартать те вăйă ирттерет.

В о с п и т а т е л ь.

Вăй-халпа тулса хавассăн,
Çат! çапса ик çунатне

Ачасем аллисемпе çунатсем пек сулаççĕ.

В о с п и т а т е л ь.

Авăтать автан пит ассăн:
– Ки-ки-ри-ку, ки-ки-рик!

Ачасем автан хыççăн тепĕр хут калаççĕ.

В о с п и т а т е л ь.

Сар автан çӳрет мăнаçлăн:
Пуçне каçăртнă ирех.

Ачасем пуçĕсене каçăртса, урисене çӳллĕ çĕклесе утаççĕ.

Чăх чĕппи чупать ун хыççăн:
– Чĕв, чĕв, чĕв, çиес килет…
(Альбина Юрату)

Ачасем чăх чĕпписем пек сасă параççĕ, чупса çӳреççĕ.

## *2-мĕш вăйă.* **Çил-тăман шавлать**

***Тĕллевсем:*** ачасене воспитатель сассин интонацине итлеме вĕрентесси, паллана юмах сюжетне каласа парасси, хускану активлăхне аталантарасси.

***Кăтарту хатĕрĕсем*:** мулкач çури тата кашкăр çури (теттесем).

***Ытти ĕç-хĕлпе çыхăнни***: музыка, илемлĕ литература, пуплев аталанăвĕ.

В ă й ă   ю х ă м ĕ

Воспитатель ачасене чӳрече патне илсе пырать те йĕри-тавра мĕн чухлĕ юр хӳсе лартнине кăтартать.

В о с п и т а т е л ь. Урамра çил-тăман тăрăшать, мĕн пур çулсене, мĕн пур сукмаксене хӳсе лартать. Çил-тăман лăпланчĕ, илтĕнмест вăл. Атьăрха итлесе пăхар, трубара çил-тăман уламасть-и?

«Çил-тăман» интонациллĕ вăйă.
Воспитатель ачасене çил-тăман сассине итлеме сĕнет.

В о с п и т а т е л ь (*хаяррăн*).

Çилĕн хапхи уçăлсан
Асар-писер çил-тăман
Сиксе тухать тепĕр чух:
– У-у-у!

Сĕм вăрманта тулашать,
Аслă уйра аташать.

А ч а с е м *(хыттăн)*. У-у-у!

В о с п и т а т е л ь.

Мĕн пур çиллĕ тăмана
Айăн-çийĕн тустарса:
– У-у-у!
Яла килет кустарса.
(Илле Тăхти)

А ч а с е м *(шăппăн).* У-у-у!

Воспитатель ачасене çил-тăман пĕтĕм çула хӳсе лартнине пĕлтерет. Кĕреçесем илсе юр тасатма ыйтать. Ачасем «кĕреçесем илсе юр тасатма пуçлаççĕ». Савăнăçлă кĕвĕпе «Таса сукмаксем» хускануллă импровизаци ирттереççĕ.

В о с п и т а т е л ь.

Çулсене юртан тасатăр,
Илĕр пысăк кĕреçе.
Пĕрре, иккĕ, ак çапла,
Пăхăр, çулсем тап-таса.

А ч а с е м.

Пĕрре, иккĕ, ак çапла,
Пăхăр, çулсем тап-таса.

В о с п и т а т е л ь.

Кĕреçепе шаккатпăр,
Унтан шăппăн ларатпăр.
Пĕрре, иккĕ, ак çапла,
Пăхăр, епле тап-таса.

А ч а с е м.

Пĕрре, иккĕ, ак çапла,
Пăхăр, епле тап-таса.

Воспитатель тĕм айĕнче мулкач çурипе кашкăр çурине (теттесем) курать те ачасенчен ыйтать: «Вĕсем мĕнле юмахран? Чĕр чунсем мĕншĕн урăх туслă мар?». Ачасем паллană юмаха аса илеççĕ. Воспитатель ачасене теттесене выляма парать.

## *3-мĕш вăйă.* **Петрушка концерчĕ**

***Тĕллевсем:*** театраллă вăйăсемпе интереслентересси.
***Кăтарту хатĕрĕсем*:** Петрушка, Катя пукане.
***Ытти ĕç-хĕлпе çыхăнни:*** музыка.

В ă й ă ю х ă м ĕ

Воспитатель ачасене ширма умне лартать. Ширма умне концерт ертсе пыракан Петрушка тухать.

П е т р у ш к а.

Сирĕн пата хăнана
Петрушка килсе çитрĕ.
Салам, салам, ку эпĕ (*хăй çине кăтартать*).
Кусем ман юлташсем (*ачасем çине кăтартать*).

В о с п и т а т е л ь. Петрушка, хăнана мĕнпе килтĕн?

П е т р у ш к а. Эпĕ сире концерт кăтартатăп.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, сирĕн концерт курас килет-и?

А ч а с е м. Çапла!

В о с п и т а т е л ь. Петрушка, ху мĕн пултарнине кăтартса пар.

П е т р у ш к а. Манăн калпак çине пăхса киленĕр, шăнкăрмасем çине. Вĕсем акă мĕнле чăнкăртатаççĕ (*шăнкăрмасемпе чăнкăртаттарать*).

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, атьăр-ха савăк кĕвĕ выляр.

Петрушкăпа ачасем шăнкăрмасемпе чăнкăртаттараççĕ.

П е т р у ш к а. Халĕ вара, хисеплĕ куракансем, сирĕн умра паллă юрăçă – Катя пукане.

Ширма умне чăваш кĕпи тăхăннă пукане тухать.

К а т я п у к а н е.

Юр çĕр каçипех вĕçтерчĕ
Мамăк евĕр ярăнса.
Хĕл çитни çинчен систерчĕ
Парăс евĕр хупласа.
(Светлана Гордеева)

К а т я п у к а н е.

Лапка-лапка юр çăвать,
Хура çĕре шуратать,
Хура çĕре шуратать,
Кĕрхи куна ăсатать.

Ваштăр-ваштăр çил вĕрет,
Питe сивĕ чĕпĕтет,
Питe сивĕ чĕпĕтет,
Хĕл çитнине пĕлтерет.
(В. Давыдов-Анатри)

П е т р у ш к а. Маттур, Катя!

Петрушкăпа Катя ташлаççĕ, ачасем алă çупаççĕ. Кайран Петрушка ачасене те ташлама чĕнет.

## *4-мĕш вăйă.* **Кушак çури чирленĕ**

***Тĕллевсем***: ачасене пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса ĕçлессине явăçтарасси, вырăс фольклорне тĕпе хурса драматизацие явăçтарасси.

***Кăтарту хатĕрĕсем*****:** кушак çури (тетте), тухтăр тумĕ.

***Ытти ĕç-хĕлпе çыхăнни***: музыка, илемлĕ литература, пуплев аталанăвĕ.

В ă й ă ю х ă м ĕ

Воспитатель ушкăна майне ăшă çыхнă кушак çурине илсе килет. Кушак çурине сыватма сĕнет. Ачасем воспитательпе пĕрле эмелсем шыраççĕ. Ачасем эмел тупаççĕ те воспитателе параççĕ. Воспитатель тухтăр рольне вылять.

Т у х т ă р. Кушак çурин пырĕ ыратать. Вăл сивĕ сĕт ĕçнĕ те чирленĕ. Атьăр-ха кушак çурине шеллетпĕр (*ачасем кушак çурине ачашлаççĕ*). Акă сана, кушак çури, эмел. Пĕрер чей кашăкĕ ĕç, вара сывалăн. Тепри кам?

Ачасем тухтăр патне хăйсен теттисемпе пыраççĕ. Тухтăр кашни чирлĕ теттене тытса пăхать, эмелсем парать.

Т у х т ă р. Курăр-ха, ачасем, пирĕн кушак çури сывалчĕ.

Воспитатель чăваш ача-пăча сăввисене каласа парать.

«Мяу-мяу, – тет кушак çури, –
Килтĕм эпĕ, – тет вăл, – хăнана.
Тутлă сĕт, хăйма санăн пур-и,
Вара юлăп эпĕ сан патна».
(Юхма Мишши)

Т у х т ă р. Пирĕн кушак çури епле илемленсе кайрĕ. Вăл хăйма юратать.
Юратать йăпăлтатма
Мăрăлти чее Васук:

«Тутанасчĕ кăшт хăйма,
Унтан тутли ним те çук!
(Людмила Николаева)
Мяу, мяу, хăй кăна
Мансăрах хăйма çиет.
Кун пек тутлă хăймана
Манăн та çиес килет».
(Юхма Мишши)

Воспитатель ачасене чирлĕ теттесем сывални çинчен пĕлтерет. Халĕ вара савăнма та юрать. Ачасем кушак çури йĕри-тавра тăраççĕ те савăнăçлă кĕвĕ çеммипе ташлаççĕ.

## Пуш уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем

### *1-мĕш вăйă.* **Анне ăшши**

***Тĕллевсем**:* ачасенче вăйă йĕрки патне çепĕç туйăм çуратасси, вăйă-импровизацине хавхалантарса ярасси, рольти сăнара калăплама вĕрентесси.

***Кăтарту хатĕрĕсем*:** мулкачпа унăн çурисене сăнлакан ӳкерчĕк. Мулкачпа кашкăр теттесем.

***Ытти ĕç-хĕлпе çыхăнни**:* музыка.

В ă й ă  ю х ă м ĕ

Воспитатель ачасем патне мулкачпа унăн çурисене сăнлакан ӳкерчĕке илсе килет, вăйă-драматизаци йĕркелет.
Асли (воспитатель) – куян туссен амăшĕ, вăлах ертсе пыракан та, кĕçĕннисем (ачасем) – мулкач çурисем пулса тăраççĕ.

Е р т с е  п ы р а к а н.

Хĕвел пăхать ирĕлсе,
Кӳлленчĕке типĕтсе,
Мăн вăрмана ыр сунса,
Пур чĕр чуна вăратса.
Уçланкăра мулкачсем
Тăрăс-тăрăс сикеççĕ,
Çуркуннене саваççĕ,
Пĕр-пĕринпе выляççĕ,
Унта-кунта чупаççĕ.

Ачасем сиккелеççĕ.

Анчах çапла пĕринче
Кашкăр кашаман çитет,
Шăлсене шакка-шакка
Мулкачсене хăвалать.

К а ш к ă р (*воспитатель сассине улăштарса*).

Тарчĕç манăн тусăмсем,
Пĕчĕк, тутлă мулкачсем.
Эпĕ вара – хыçалтан,
Вăрман витĕр – çаруран.

Ачасем чупаççĕ.

Е р т с е   п ы р а к а н.

Кашкăр куян туссене
Тупаймарĕ ку тĕлте,
Пĕчĕк мулкач çурисем
Тарчĕç урăх çĕрсене.

Ачасем çаврăнса пăхкалаççĕ, амăшне шыраççĕ.

М у л к а ч   ç у р и с е м.

Пирĕн çуртăмăр ăçта-ши?
Пирĕн аннеçĕм унта-ши?
Аннене курас килет,
Анне пек пулас килет.

Ачасем аллисене икĕ еннелле сарса кулянна пек тăраççĕ.

Е р т с е   п ы р а к а н.

Ан кулянăр, тусăмсем,
Аннĕр тупăнĕ кĕçех,
Атьăр ăна илтмелле
Юрă юрлар ушкăнĕпе.

Ачасем анне çинчен пĕр-пĕр пĕлнĕ юрă юрлаççĕ.

Е р т с е   п ы р а к а н.

Çавăнта такам утать,
Ассăн-ассăн хăй сывлать.

М у л к а ч   а м ă ш ĕ.

Ах, ăçта-ши ачамсем,
Пĕчĕк мулкач çурисем?
Пулăшсамăрччĕ тупма
Эп тав тăвăп пурсăра!

Е р т с е   п ы р а к а н.

Мулкач, эсӗ ан кулян,
Телей тени пурах сан,
Акӑ санӑн пепкӳсем,
Вӑрӑм хӑлха тусусем!

М у л к а ч   а м ӑ ш ӗ.

Тавтапуҫ ӗнтӗ пурне те,
Сывлӑх пултӑрччӗ сире!
Кашнин амӑшӗ пӗрре –
Упрама ҫеҫ пӗлмелле.

Е р т с е   п ы р а к а н.

Атьӑр пӗрле савӑнар,
Мулкачсене ыр сунар!
Пултӑрччӗ вӗсен ялан
Амӑш ҫумра юнашар.

Ачасем амӑшӗсем ҫинчен сӑвӑсем калаҫҫӗ.

## *2-мӗш вӑйӑ.* **Пуйӑс килет чашлатса**

***Тӗллевсем:*** ачасене вӑйӑ ҫул ҫӳреве явӑҫтарасси, ритм туйӑмне аталантарасси.

***Кӑтарту хатӗрӗсем*:** асанне тумӗ, Ҫуркунне (пукане), кушак (тетте), чарӑну декорацийӗсем: ялавсем, параппанпа труба, ҫурхи чечексен ҫыххи.

***Ытти ӗҫ-хӗлпе ҫыхӑнни*:** музыка.

В ӑ й ӑ   ю х ӑ м ӗ

Асанне тумӗллӗ воспитатель пӗчӗккисене яла хӑй патне хӑнана чӗнет.

А с а н н е.

Сывӑ-и, ман ачамсем,
Чи юратнӑ мӑнуксем?
Эпӗ – сирӗн асанне,
Манӑн ялӑм инҫетре.
Хӑнана хам патӑма
Сире чӗнес шутӑм пур,
Вӗри чейпе, пылпала
Ман хӑналас кӑмӑл пур.
Атьӑр-ха апла пулсан
Хӑвӑртрах пуҫтарӑнар.

Вакунсене вырнаҫса
Пуйăспа ҫула тухар.

Ачасем Н. Метлов кĕввипе хывнă «Поезд» юрăпа ҫула тухаҫҫĕ.

Ак пуйăсĕ ҫула тухрĕ тапранса,
Яла пит васкать мĕн пур ача-пăча.
Чу-чу! та пăш-пăш! тутарса, чăшлатса
Ҫитетпĕр илемлĕ вăрманлă яла.
Чим, пуйăс янратрĕ вăраххăн ту! ту!
Тăхтатпăр кăштах – ак умра чарăну.

А с а н н е.

Пĕрремĕш чарăну – парад лапамĕ.
Ҫакă лапамра парад –
Хаклă уяв палăртать.
Ҫĕршер салтак аллинче
Труба – сасси янăрать.
Параппан сасси инҫе
Лапам тăрăх саланать.

Ачасем, атьăр-ха эпир те сирĕнпе салтаксем пек утатпăр.

Ачасем марш кĕввипе воспитатель хыҫҫăн пӳлĕм тавра утса ҫаврăнаҫҫĕ.

А с а н н е.

Вăхăт ҫитет тапранма,
Ҫула малалла тăсма.
Вакунсем ҫине ларса
Вĕҫтерер-и хăнана?

Кĕвĕ ҫеммипе ачасем пуйăспа малалла каяҫҫĕ.

А с а н н е. Иккĕмĕш чарăну – ҫурхи уҫланкă!

Чăваш кĕввипе ачасен умне ҫуркунне тумне тăхăннă пукане тухать.

Ҫ у р к у н н е.

Салам пултăр, ачасем,
Манăн чипер тусăмсем.
Эп – асамлă Ҫуркунне,
Вăрататăп ыйхăран
Вăрмана та уй-хире.
Ав Хĕвел те вăранса
Тутлăн илчĕ карăнса.
Пире хăй патне чĕнет,
Юрă юрлама сĕнет.

Ачасем хĕвел ҫинчен юрă юрлаҫҫĕ.

А с а н н е.

Халь ĕнтĕ инҫех те мар,
Килĕм манăн юнашар.
Вăрманти сукмакпала
Ҫывăхлатăпăр ҫула.

Ачасем ҫурт умне ҫитсе тухаҫҫĕ.

А с а н н е.

Ҫакă ҫуртăм – манăн кил,
Хăтлă, ҫутă манăн кил.

Ҫ у р к у н н е.

Асанне кил-ҫуртĕнче
Пит илемлĕ те хитре.
Кушак та ҫавнах калать,
Хуҫине вăл юрататать.

А с а н н е (*кушака алла тытса ачашлать*).

Мăр-мăр тусăмҫăм сире
Сĕтел хушшине чĕнет,
Хăйне ачаш алăпа
Ыталасса пит кĕтет.

Ачасем кушака ачашлаҫҫĕ, унтан Ҫурккуннепе, асаннепе пĕрле чăваш ташши ташлаҫҫĕ. Ҫавăн пекех ачасемпе пĕрле чей ĕҫме те юрать.

## *3-мĕш вăйă.* **Пăт-пăт-пăт! тумлать тумлам**

***Тĕллевсем:*** ачасене ҫуркунне паллисемпе паллаштарасси; ҫут ҫанталăкри пулăмсемпе кĕвĕри сăнарсене танлаштарма вĕрентесси; кирлĕ сăнара тĕрлĕ хусканупа ипровизацилеме хавхалантарасси.

***Кăтарту хатĕрĕсем*:** фланелеграф ҫинчи театрпа кăтартмалли ӳкерчĕксен пуххи (ҫурт тăрринчи тумла пăрĕ, ҫурт ҫи виттийĕн айккипе ҫакăнса тăракан пысăк тумла пăрĕ; урам (Улаҫка кушака хăвалать; ҫынсем ĕҫе каяҫҫĕ; машинăсем чупаҫҫĕ); хĕвел тата хавассăн чĕриклетекен ҫерҫи; тумла пăрĕ йĕрет; ҫерҫипе ула курак.

***Ытти ĕҫ-хĕлпе ҫыхăнни:*** музыка, тавралăхпа паллаштарасси, физкультура аталанăвĕ.

В ă й ă  ю х ă м ĕ

Ачасем ҫурт тăрринчен тумлам пăрĕ юхнине сăначчăр тесе воспитатель пĕчĕкскерсене чӳрече умнерех иртме сĕнет. Уҫăлма тухсан пăр тумламĕсем ирĕлсе

тумланине пӗрле пăхнине аса илтерет. Тумла юхнине сăнлакан пӗр-пӗр музыка кӗвви ярать те ачасене итлеме чӗнет. Ҫак сассах воспитатель металлофонпа выляса кăтартма пултарать.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем илтетӗр-и? Ку тумла тумлать. Пăт-пăт… Пăт-пăт… Ҫак тумламсем ăҫтан-ши? (*Ачасем хуравлаççӗ.)* Ҫуркунне çитрӗ, çурт тăрринчи юра ирӗлтерчӗ. Ирӗлнӗ юр шыв тумламне çаврăнса пăт-пăт, пăт-пăт туса юхса анать. Ҫапларах йӗреççӗ пăр тумламӗсем. Вӗсем хӗл иртсе кайнишӗн кулянаççӗ. Атьăр-ха вӗсен калаçăвне итлесе пăхар. (*Каласа пынă май ӳкерчӗксем кăтартать.*)

Фланелеграф çинчи «Тумламсем мӗншӗн йӗреççӗ?» юмах.

В о с п и т а т е л ь. Пӗр çурт тăрринче пăр тумламӗсем пурăннă. Хӗл каçа вӗсем ӳссе те ӳссе пынă. Вӗсем пурте хытă пулнă, витӗр курăннă. Ҫурт тăррин пӗр кӗтесӗнче чи пысăк пăр тумламӗ ӳссе ларнă. Вăл питӗ çӳлте çакăнса тăнăран йӗри-тавраллине пӗтӗмпех курма пултарнă. Вăл çакăнпа мухтаннă та! Пăр тумламӗ ирсерен Улаçка ют кушаксене кил картинчен хăваланине сăнанă. Ҫынсем ӗçе васканине, машинăсем ирте-ирте кайнине те кашни кунах курнă çакскер. Пӗррехинче пăр тумламӗ чирлесе ӳкнӗ. Иккен, вӗсем те чирлеççӗ-мӗн? Ҫурт çумӗпе вӗççе иртекен çерçи: «Ҫуркунне çитрӗ! Ҫуркунне çитрӗ!» – тесе хавассăн чӗриклетнӗ. «Ҫуркунне ăçта вара хăй?» – çапла шухăшласа пăр тумламӗ ун-кун пăхкаласа илнӗ. Ҫерçи вара çурт тăррине вӗççе ларса çуркунне çитни çинчен тепӗр хут аса илтернӗ.

Тӳпере хӗвел курăнса кайнă. Пăр тумламӗ ăна унччен те курнă-ха, анчах та хальхи пек нихăçан та вӗри пулман вăл. «Эпӗ чирлерӗм пулас», – шухăшланă пăр тумламӗ. Хӗвел пурне те шевлисемпе савса çупăрланă, çӗре те ăшăтнă. Ҫерçи хӗл иртнишӗн савăнса тата хытăрах чӗриклетнӗ.

«Нивушлӗ хӗл иртсе каять те урăх нихăçан та сивӗтмест?» – шикленсе ӳкнӗ пăр тумламӗ. Юнашарах çерçи: «Чӗрик! Чӗрик! Пăр тумламӗсем те ирӗлеççӗ!» – тесе савăнса юрланă. «Эх, манăн кӳршӗсем пӗчӗкленсех юлчӗç. Апла пулсан эпӗ те ирӗлетӗп вӗт. Пулăшсамăр мана!» – çапла хурланса йӗрсе янă чи пысăк пăр тумламӗ.

Хӗвел тата хытăрах хӗртме тытăннă. Ҫурт тăрринчи юр та, пăр тумламӗсем те ирӗлсе кайнă. Юнашар вӗççе иртекен ула курак: «Кар-р! Ара, пăр тумламӗсем ăçта вара? Кар-р! Хӗлле вӗсем нумайччӗ-çке?» – тесе тӗлӗнсе ыйтнă. Ҫерçи çакна: «Вăхăт çитсен пăр тумламӗсем çӗнӗрен ӳссе ларӗç. Халех мар, хӗл ларсан. Чӗрик! Чӗрик! Халӗ çуркунне çитрӗ!» – тесе хуравланă та ырă хыпара ыттисене пӗлтерме вӗççе кайнă.

Воспитатель ачасенчен юмах пирки ыйтса пĕлет. Унтан тĕрлĕ этюдсем ирттерет (кашни этюд валли воспитатель ятарлă музыкăпа усă курать).
«Çерçисем вĕçеççĕ» этюд.
Ачасем – «çерçисем» пӳлĕмре тĕрлĕ еннелле «çунаттисемпе сулласа» «вĕçсе çӳреççĕ». «Çерçисем шыв ĕçеççĕ» этюд.
Ачасем – «çерçисем» музыка çеммипе малалла пĕшкĕнеççĕ, аллисене («çунаттисене») икĕ еннелле сараççĕ.
«Çерçисем çуркунне çитнипе савăнаççĕ» этюд.
Ачасем – «çерçисем» тĕрлĕ сасăпа хавассăн «чĕриклетеççĕ», «çунаттисемпе çапса» хăйсен савăнăçне кăтартаççĕ.

## *4-мĕш вăйă.* **Пуканесене валли апат хатĕрлетпĕр**

***Тĕллевсем***: ачасене сюжет вăййисен пурнăçри выранне тĕрĕс палăртма вĕрентесси, пуканепе чĕрĕ çынпа хутшăннă пек хутшăнтарасси, рольсемпе выляма явăçтарасси. Пуплевпе шухăшлава аталантарасси.

***Кăтарту хатĕрĕсем*:** пуканесен кĕтесĕ (чашăк-тирĕк, плита, сĕтел, краватьсем), пуканесем.

***Ытти ĕç-хĕлпе çыхăнни*:** сюжетлă вăйă, пуплев аталанăвĕ, тавралăхпа паллаштарасси.

В ă й ă  ю х ă м ĕ

Воспитатель ачасене сĕтел патне илсе пырать, вĕсен тусĕсем – пуканесем – урамран хăçан кĕрессипе кăсăкланать. Пуканесем валли кăнтăр апачĕ хатĕрлеме вăхăт çитнине аса илтерет. Ачасем кастрюльсем илсе воспитательпе пĕрле «купăста яшки пĕçереççĕ».

В о с п и т а т е л ь.

Пирĕн алра кишĕр пур,
Купăсти те акă – кур!
Вĕттĕн сухан туратпăр,
Яшкана яратпăр.

Ачасем «кишĕр тасатаççĕ, купăста, сухан тураççĕ».

В о с п и т а т е л ь.

Тăварне хушатпăр,
Хуллен пăтрататпăр.

Ачасем кастрюльте кашăкпа пăтрataççĕ.

В о с п и т а т е л ь.

Яшки тутлă пултăрах,
Кастрюль тĕпĕ тухтăрах!
Ай тутлă!

Ачасем «яшка тутанаççĕ.
Воспитатель ачасене кашни пукане валли турилкке, кашăк тата вилка хурса пама вĕрентет. Аслисем пулăшнипе ачасем чашăк-тирĕке кирлĕ пек вырнаçтараççĕ.

В о с п и т а т е л ь.

Апат çиме лариччен
Сĕтел çине хатĕрлер.
Турилккисене лартар,
Кашăк-çăпала хурар.
Кĕçтукпала Мишука,
Улькkапала Çинука,
Лисукпала Ванюка
Вĕри яшка тутанма
Лартар сĕтел тавралла.

Ачасем «турилккене яшка антараççĕ».
Воспитатель ачасене сĕтел хушшине кашни пуканене ятран чĕнме вĕрентет. Ачасем: «Лисук, хĕрĕм, çиме кил!» – тесе пур пуканене те сĕтел тавра лартса тухаççĕ.

В о с п и т а т е л ь.

Купăста яшки паян
Тутлă пиçрĕ ушкăнпа.
Катлечĕ те какайран,
Тути, чăн та, пит аван!
Пуканесем савăнса
Сире ăшшăн тав тăваç.
Çинĕ хыççăн халь вĕсем
Часах çывăрма выртаç.

Ачасем пĕчĕк тусĕсене çывăрма вырттараççĕ. Воспитатель хуллен илемлĕ, лăпкă кĕвĕ ярать, ачасем пуканесене сиктереççĕ.

## Ака уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем

### *1-мĕш вăйă.* **Шăши тус**

***Тĕллевĕсем****:* ачасене çĕнĕ юмахпа паллаштарасси, вăййа илĕртесси, сюжетра пулса иртекен пулăмсене йышăнса вăййа малалла выляма хавхалантарасси.

***Кăтарту хатĕрĕсем*****:** кушак тата шăши (теттесем).

***Ытти ĕç-хĕлпе çыхăнни****:* музыка, илемлĕ литература.

В ă й ă   ю х ă м ĕ

Воспитатель ушкăна шăши (тетте) илсе кĕрет. Çак пĕчĕк чĕрчун пысăк кушака курсан хăранипе чĕтремех пуçлать-мĕн. Акăлчансен сăвви тăрăх хатĕрленĕ «Маруç шăшипе Кушаккуç кушак» инсценировкăна (К. Чуковский куçарнă) теттесен театрĕ вылянипе паллашма сĕнет. Пур роле те воспитатель хăй каласа пырать, сассине улăштарса калаçать.

Е р т с е   п ы р а к а н.

Пурăннă тет шăши тус,
Ячĕ пулнă ун Маруç.
Пĕррехинче кушака
Маруç курать хушăкра.
Çивĕч шăллă Кушаккуç,
Хаяр, пысăк симĕс куç.
Кушаккуç Маруç патне
Вăрт! çеç сикрĕ урипе.

К у ш а к (*воспитатель сассине улăштарса*).

Ах, Маруçăм, ман Маруç,
Çуммăн лар-ха, атя, куç.
Юрă юрласа парам,
Кăшт кăна савăнтарам.

Е р т с е   п ы р а к а н.

Анчах Маруç айван мар.

М а р у ç *(шăши).*

Эсĕ мана, Кушаккуç,
Улталама ан васка,
Куçусемпе вылятса
Çисе яма кăшт тăхта.

Е р т с е   п ы р а к а н.

Çапла каласа шăши
Тарса кĕчĕ, куртăр-и?

Ачасем, юмах килĕшрĕ-и?

Ачасем хуравлаççĕ. Унтан пĕчĕккисемпе пĕрле кушакпа шăшилле выляççĕ. Ачасем – шăшисем çаврашка йĕркелеççĕ, воспитатель аллинче кушак тетте.

Е р т с е   п ы р а к а н.

Ваçук кушак иртенпех
Шăшисене хураллать.
Лешсем çавна пĕлеççĕ,
Шăтăкра çес выляççĕ.

Ачасем – «шăшисем» пӳлĕм тăрăх чупаççĕ.

Е р т с е   п ы р а к а н.

Тарăхать кушак аçи.

В а ç у к   к у ш а к.

Кăна ахаль хăварма
Чăтăм çук ман, тупата,
Пурпĕрех сире тытап,
Пурпĕрех çисе ярап.

Е р т с е   п ы р а к а н.

Ваçук тем пек чупсан та
Тытаймарĕ пĕр чун та…
Шăшисем тĕп сакайне
Вăрт! çеç чăмрĕç ушкăнпа.

Ачасем – «шăшисем» пукансем хыçне пытанаççĕ.

Е р т с е   п ы р а к а н.

Ваçук кушак таплатса
Çӳрет хăйне мухтаса.
Куçĕсем çеç тĕлĕрес,
Çывăрма ĕмĕтленеç.

Ваçук кушак çывăрма выртать.

Е р т с е   п ы р а к а н.

Шăшисем шăп çеç утса
Пухăнчĕç кушак тавра,
Хӳрине çырта-çырта
Савăнчĕç çеç ун тавра!

Ачасем – «шăшисем» кушака тапăнмалла выляççĕ.

Е р т с е  п ы р а к а н.

Ыйхă чăпти кушакĕ,
Йывăр пулас ун ыйхи,
Аран-аран вăранса
Чупрĕ шăшисем «тытма».

Кушак шăшисем хыççăн чупать.

## *2-мĕш вăйă.* Хĕвел шевлисем

***Тĕллевĕсем:*** ачасен астăвăмне, шухăшласа кăларас пултарулăха аталантарасси, тĕрлĕ хусканусене хастартарах пурнăçлама, импровизацисене харпăр хăй тĕллĕн хутшăнма хистесси.

***Кăтарту хатĕрĕсем*:** тĕкĕр, театрта вылямалли ўкерчĕксен пуххи (хĕвел уçланкăна çутатать; уçланкăра сăрă мулкач çывăрать; сăрă мулкач хĕвеле курнипе савăнать; сăрă мулкач хĕвел шевлине курать; мулкачсем выляççĕ; сăрă мулкач хăйĕн тусне шырать; чакак чакăлтатать; мулкач амăшĕ хĕвел шевли ăçта çухалнине ăнлантарать).

***Ытти ĕç-хĕлпе çыхăнни:*** музыка, пуплеве аталантарасси, тавралăхпа паллаштарасси.

В ă й ă  ю х ă м ĕ

Ку вăййа выляма хĕвеллĕ кун кирлĕ. Воспитатель ачасене йĕри-тавралла пăхса пўлĕм еплерех çуталса кайнине сăнама сĕнет: «Пăхăр-ха, пирĕн пўлĕмре паян епле çутă! Мĕншĕн-ши? Паян пирĕн пата хăнана хĕвел килчĕ. Хĕвел шевлисем питĕ выляма кăмăлласçĕ: вĕсем мулкач пек пулса хўме тăрăх сикме юратаççĕ».
Хаваслă кĕвĕ янăрать, воспитатель ачасем куриччен тĕкĕрпе хĕвел шевлисемпе вылять, сăвăласа калать.

В о с п и т а т е л ь.

Стена тăрăх сиккелеççĕ
Сарă хĕвел шевлисем,
Шăплăхра та таш ташлаççĕ
Унăн çутă шевлисем.
Сар хĕвелĕн пайăркийĕ
Шевлесем шав янăран
Тутлă çывăран ачийĕ
Ав вăранчĕ ыйхăран.

Воспитатель ачасене хĕвел шевлисемпе выляма чĕнет.
Хавaслă кĕвĕ янăрать, воспитатель ачасене теттесен театрне курма сĕнет
(ачасене ӳкерчĕксен театрне кăтартать).

В о с п и т а т е л ь. Пĕррехинче хĕвел вăрманти уçланкăна кĕрет, ăна çутатса ярать. Ку таранччен тĕлĕрсе ларнă вăрман вăранать, сунасласа илет те йĕри-тавралла пăхса çаврăнать. Уçланкăра çав тери хитре пулнăран сăрă мулкач ĕхлетсех илет: «Еплерех ăшă, çутă! Выляма та питĕ аван пулмалла!».

Анчах та тĕттĕм вăрманти пĕтĕм мулкач тутлăн çывăрать-ха. Сăрă мулкача тунсăх пусать. Сасартăк вăл курăк çинче çутă шевле асăрхать те ăна хăвалама тытăнать. Сăрă мулкач шевлене тытас тесе сиксе те пăхать, лешĕ шав тарать. Акă шевле çӳллĕ тĕм çине улăхса ларчĕ, тем самантра мулкача çаврăнчĕ.

«Эсĕ кам?» – тĕлĕнсе ыйтрĕ сăрă мулкач. «Эпĕ мулкач», – хуравларĕ шевле. Сăрă мулкач питĕ тĕлĕннипе нăшлаттарса илчĕ, унтан çапларах хушса хучĕ: «Эпĕ нихăçан та вĕçекен мулкачсене курман. Эсĕ мар, эпĕ мулкач». Мулкача çаврăннă хĕвел шевли çӳллĕ йывăç çине сиксе хăпарчĕ, лапписене çĕрелле усса вырнаçса ларчĕ. Унтан сăрă мулкач çине аялалла пăхса: «Эпĕ ахаль мулкач мар, хĕвел мулкачи, çавăнпа мана Шевле мулкач тесе чĕнеççĕ», – тесе хуравларĕ.

«Ав еплерех иккен шевле мулкачсем», – шухăшларĕ те сăрă мулкач çапларах сĕнӳ пачĕ: «Атя санпа хăваламалла выляр!»

Шевле мулкач килĕшрĕ. Икĕ тус выля-выля каç пулнине те сисмерĕ. Шевле мулкач кичемленчĕ. «Эсĕ ывăнмарăн пулĕ-çке? – ыйтрĕ сăрă мулкач. – Тăхта-ха, эпĕ сана ним те мар хăваласа тытатăп!»

Сăрă мулкач тытас тенĕ хушăрах шевле мулкач таçта çухалчĕ. Тем пек шырасан та хăйĕн çĕнĕ тусне сăрă мулкач тупаймарĕ. «Шевле мулкач, ăçта эсĕ?!» – кăшкăрса ыйтрĕ аптранăскер. Кăлăхах. Хирĕç сас паракан пулмарĕ. Чăрăш çинче ларакан чакак кăна тăрăхласа: «Тр-р-р, курăр-ха, курăр, епле айван мулкач! Вăл шевле мулкачсем каç пулсан çухалнине те пĕлмест вĕт!» –тесе чакăлтатрĕ, унтан çĕнĕ хыпара ыттисене пĕлтерме вĕçсе кайрĕ. Тĕлĕннĕ сăрă мулкач илтни çинчен амăшĕнчен ыйтса пĕлме шутларĕ.

«Ачам, каçхине хĕвел хăйĕн шевлисемпе вăрман хыçне пытанать. Ирхине вара çĕнĕрен çӳле улăхса шевлисемпе тĕнчене çутатать», – ăшшăн хуравларĕ амăшĕ.

«Ыран татах шевле мулкачпа выляма пултаратăп эппин!» – çакăн пек ĕмĕтленсе сăрă мулкач тутлă ыйха путрĕ.

Воспитатель ачасенчен юмах килĕшнине ыйтса пĕлет. Ачасем хуравлаççĕ.

## *3-мĕш вăйă.* **Карапсем ишеççĕ**

***Тĕллевĕсем:*** ачасен пуплевне аталантарасси, роле кĕме хавхалантарасси, хăй тĕллĕн импровизацилеме вĕрентесси.

***Кăтарту хатĕрĕсем*:** хутран ăсталанă карап; матрос калпакĕсем.

***Ытти ĕç-хĕлпе çыхăнни***: музыка, пуплеве аталантарасси.

В ă й ă  ю х ă м ĕ

Ситуациллĕ вăййа урамра та, пӳлĕмре те йĕркелеме юрать. Воспитатель ачасене урамра юр ирĕлнипе пусӑтараннă шыв кӳлленчĕкĕсене сăнама чӳрече умне чĕнет. Пăр тумламĕ çинчен калакан юмаха аса илмелли ыйтусем парать: Пăр тумламĕсем ăçта пурăннă? Пӳрт çи виттийĕ çинчи пысăк пăр катăкĕ мĕн курнă? Пăр катăкĕ мĕншĕн хурланнă? Çерçи мĕн каласшăн пулнă? Пăр тумламĕсем тепĕр хутчен пӳрт тăрринче хăçан пурăнма тытăнĕç? Мĕншĕн вĕсем хĕлле кăна пурăнаяççĕ? Воспитатель пĕтĕмлетӳ тăват: «Урамра шыв юхма тытăнни çуркунне çитнине пĕлтерет». Унтан ачасене хутран ăсталанă карап кăтартать, унпа выляма чĕнет.

В о с п и т а т е л ь.

Аллăмра ман хут карап,
Ăна çирĕп эп тытап.
Çак илемлĕ карапа
Шыв тăрăх ишме ярап.
Хăрамасть хайхи карап
Вăйлă çилтен, çумăртан,
Шикленмест вăл тăвăлтан,
Хумсем çӳллĕ пуласран.

Воспитатель карапа шыв тултарнă пĕр-пĕр савăта ярать. Ачасем йĕри-тавралла тăрса тухса сăнаççĕ. Карап тапраннă чух илтĕнекен мотор шавĕн сасси. «Тинĕс çул çӳревĕ карап çинче туслă ушкăн пулсан çеç лайăх иртет», – пĕлтерет воспитатель. Ачасем моряк калпакĕсене тăхăнса «Карап çинче» вăйă-хускану йĕркелеççĕ.

К а п и т а н *(воспитатель).*

Эпир хастар матроссем,
Çирĕппĕн утатпăр,
Капитанпа юрăсем
Савăнса юрлатпăр.

Ачасем марш çеммипе воспитатель хыççăн утаççĕ.

М а т р о с с е м *(ачасем).*

Пĕрре, иккĕ – утатпăр,
Пĕрре, иккĕ – юрлатпăр.

К а п и т а н.

Асăрхарĕç матроссем:
Типĕ çĕр умра,
Çыран хĕрне çул тытма
Хушрĕç штурмана.

Ачасем аллисене çамка çине тытса инçетелле пăхнă пек тăваççĕ.

М а т р о с с е м.

Типĕ çĕр умра!
Типĕ çĕр умра!

К а п и т а н.

Акă пирĕн хут карап
Тинĕспе ишет!
Пирĕн паттăр капитан
Тĕрĕс çул пĕлет!

Ачасем аллисене сарса карап ишнине туса кăтартаççĕ.

М а т р о с с е м.

Тинĕспе ишет!
Тинĕспе ишет!

## *4-мĕш вăйă.* **Асамлă шăхличĕ**

***Тĕллевĕсем**:* ачасене сасă евĕрлевне илемлĕн, туйăмлăн тума хавхалантарасси; ушкăнпа импровизациленĕ май харпăр хăй рольне выляма вĕрентесси.

***Кăтарту хатĕрĕсем*:** шăхличĕ, кайăксене сăнлакан кăшăлсем (пуç çине тăхăнтарма).

***Ытти ĕç-хĕлпе çыхăнни***: музыка, пуплеве аталантарасси.

В ă й ă ю х ă м ĕ

Воспитатель ушкăна асамлă шăхличĕ илсе кĕрет. Лăпкă кĕвĕ янăрать (кĕвĕре ытларах флейта сасси). Воспитатель шăхличĕпе вылянçи тăвать.

В о с п и т а т е л ь. Шăхличĕ вылянине илтсен вăрманти кайăксем хăйсен концертне пуçлаççĕ. Вĕсем çапла юрлаççĕ (*кайăксен сассисене евĕрлесе юрлать*):

Чĕвик! Чĕвик!
Т-р-р-р! Т-р-р-р!
Кук-ку! Кук-ку!

Кар-р! кар-р! кар-р!
Кайӑксем, кунтарах пуҫтарӑнар!

Воспитатель ачасене кайӑксене сӑнлакан кӑшӑлсем тӑхӑнтартать.
Сасса уҫмалли вӑйӑ ирттерет.

В о с п и т а т е л ь.

Вӑрманта мӗн иртенпех
Кайӑк сасси илтӗнет.
Чӗвик! чӗвик! те кук-ку!
Йӑва тумалла, асту!
Кайӑксем, ӑҫта эсир?

К а й ӑ к с е м *(уҫҫӑн)*.

Чӗвик! Чӗвик!
Кук-ку! Кук-ку!

В о с п и т а т е л ь.

Каҫ та пулчӗ, йӑвара
Кайӑксем те ыйхӑра.
Чӗпписем ав ҫывӑрман,
Халь те куҫсене хупман.
(*Шӑппӑн.*) Пи-пи-пи! Пи-пи-пи!
Каҫ та пулчӗ, куртӑр-и?
Ҫывӑрма выртатпӑр-и?

К а й ӑ к ч ӗ п п и с е м (*хуллен*).

Пи-пи-пи! Пи-пи-пи!
Пи-пи-пи! Пи-пи-пи!

Воспитатель каллех шӑхличӗпе вылять, ачасене кайӑксен пасарне чӗнет.
«Кайӑксен пасарӗ» вӑйӑ ирттерет.

В о с п и т а т е л ь.

Вӗҫсе килчӗҫ пасара
Куккуксем тата хурсем.
Илчӗҫ ҫут сӑмавара,
Шушкӑсемпе премӗксем.
Хурсем карта варринче
Яра пачӗҫ ташшине!

Хура сӑнлакан кӑшӑл тӑхӑннӑ ачасем ташлаҫҫӗ, ыттисем алӑ ҫупаҫҫӗ.

В о с п и т а т е л ь.

Тайкаланса, карӑнса
Тухрӗҫ ташша савӑнса

Пĕсехеллĕ кайăксем –
Нарт-нарт кăвакалĕсем

Ачасем – «кăвакалсем» ташлаççĕ.

Воспитатель (*хăлаттеттене алла илсе*):
Пĕр кĕтмен çĕртен хăлат
Вĕçсе тухрĕ явăнса.
Унран пур чĕрчун хăрать,
Пасар кайрĕ саланса.

Ачасем–«кайăксем» çухăрашса тĕрлĕ енне «вĕçсе» саланаççĕ.

## Çу уйăхĕнче irттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем

### *1-мĕш вăйă.* **Çумăр, çу!**

***Тĕллевĕсем**:* çут тĕнче илемне, ритм туйăмне аталантарасси; ташша тухма хистесси. Кĕвĕри тĕрлĕ кăмăла туйма, пĕлнĕ юмаха каласа пама вĕрентесси.

***Кăтарту хатĕрĕсем*:** тĕрлĕ хăю çирĕплетнĕ патак, хĕвел шевлине сăнлакан мулкачсем çинчен калакан юмах валли хатĕрленĕ ӳкерчĕксен пуххи («Хĕвел шевлисем» вăййа пăхăр).

***Ытти ĕç-хĕлпе çыхăнни**:* музыка, пуплеве аталантарасси, тавралăхпа паллаштарасси.

Вăйă юхăмĕ

Воспитатель аллинче – тĕрлĕ хăю çирĕплетнĕ патак. Хаваслă кĕвĕ çеммипе вăл ачасемпе вăйă-инсценировка irттерет.

Воспитатель.
Çумăр, çу, çумăр, çу!
Пултăр хавас кăмăлу!
Чечексене шăварсам,
Хăвăрт ӳсме пулăшсам!

Ачасем аллисене малалла тăсса вылятаççĕ.

Сар хĕвел те ăшшăн
Савăнса çиçет
Симĕс курăк çийĕн,
Выляма чĕнет.

Ачасем хавас кĕвĕпе чупкаласа çӳреççĕ. Хăрушă кĕвĕ – аслати авăтни илтĕнет.
Ачасем пукансем патне чупса кайса лараççĕ.
Воспитатель ачасенчен шевле мулкачисем çинчен ыйтса пĕлет: вĕсене кам та пулин курнă-ши? Унтан асăннă хайлав патне ӳкерчĕксем кăтартса юмаха аса илме тĕрлĕ ыйтусем парать: «Сăрă мулкач шевле мулкачипе ăçта паллашнă-ши? Вĕсем мĕн тунă? Шевле мулкачи каç пулсан ăçта çухалнă? Сăрă мулкачран кам кулнă? Ăна амăшĕ мĕн каланă?»
Воспитатель хаваслă кĕвĕ ярать. «Ачасем, енчен те тулта савăнăçлă çумăр çăвать пулсан, пирĕн те кăмăл хавас пулĕ», – тет вăл пĕчĕкскерсене.
«Çумăр, çу пушшех те хытă!» инсценировка кăтартать.

В о с п и т а т е л ь.

Çумăр хытă шăварать,
Сукмаксене варалать,
Ача-пăча урамра
Çĕнĕ атăпа утать.

Ачасем ура кĕллисемпе шаккаççĕ.

А ч а с е м.

Ак çапла, ак çапла,
Çĕнĕ атă урара!

В о с п и т а т е л ь.

Ĕнтĕ акă пилĕк кун
Çумăр çăвать – пит маттур!
Пире, çумăр, ан йĕпет,
Хыт ан шавла, çын илтет.

А ч а с е м.

Вăт çапла, вăт çапла,
Пире итле, ан шавла!

В о с п и т а т е л ь.

Чарăн, çумăр, макăрма,
Çитĕ кашни кун çума!
Эпир шыв кӳлленчĕкне
Сиксе каçăпăр пĕрле.

Ачасем ун-кун сиккелесе çӳреççĕ.

А ч а с е м.

Ак çапла, ак çапла,
Сиксе каçăпăр пĕрле!

Воспитатель инсценировка тăрăх калаçу йĕркелет.

## *2-мӗш вӑйӑ.* **Ҫитӗн, ҫамрӑк юман, ҫирӗп!**

***Тӗллевӗсем****:* ӗҫе хисеплеме вӗрентесси, ачан пултарулӑхне аталантарасси, рольсенче выляма хавхалантарасси.

***Кӑтарту хатӗрӗсем*****:** йывӑҫсен декорацийӗсем (юманпа хурӑн), пӑчкӑ, витре, шӑнкӑрав.

***Ытти ӗҫ-хӗлпе ҫыхӑнни:*** музыка, тавралӑхпа паллаштарасси, пуплеве аталантарасси.

В ӑ й ӑ ю х ӑ м ӗ

Воспитатель ачасене хурӑн йывӑҫне (декораци) кӑтартса ҫапла калать: «Ку – хурӑн. Йывӑҫсем пулни питӗ аван. Вӗсем тавралӑха илемлетеҫҫӗ. Йывӑҫсем лартни питӗ аван ӗҫ». Воспитатель ачасене хурӑнпа юнашар юман лартма сӗнет, йывӑҫа илсе килсе пӳлӗм варрине вырнаҫтарать. «Ҫамрӑк юман» вӑйӑ-инсценировка йӗркелет.

В о с п и т а т е л ь.

Сад пахчинче туссемпе
Юман лартас терӗмӗр.

Ачасем аллисене пилӗке тытса юман тавра утаҫҫӗ.

В о с п и т а т е л ь.

Пӗрре-иккӗ, туссемпе
Юман лартас терӗмӗр.

Ачасем чарӑнса тӑрса алӑ ҫупаҫҫӗ, пӗр вырӑнта ҫаврӑнаҫҫӗ.

В о с п и т а т е л ь.

Ҫамрӑк юман тымарне,
Ҫӗрпеле хупларӑмӑр,
Тӑр шывпа шӑвартӑмӑр.

Йывӑҫа шӑварнӑ пек тӑваҫҫӗ.

В о с п и т а т е л ь.

Пӗрре-иккӗ, туссемпе
Тӑр шывпа шӑвартӑмӑр.

Чарӑнса тӑрса алӑ ҫупаҫҫӗ, пӗр вырӑнта ҫаврӑнаҫҫӗ.

В о с п и т а т е л ь.

Юман, ҫитӗн эсӗ ҫирӗп,
Аталан кунта эс ирӗк!

Ачасем аллисене ҫӳлелле ҫӗклесе енчен енне сулланаҫҫӗ.

В о с п и т а т е л ь.

Пĕрре-иккĕ, туссемпе
Çитĕн, юман, ирĕкре!

Ачасем алă çупаççĕ, хăйсем тавра ташласа çавăрнаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Ĕнтĕ пирĕн юман кунсерен ӳссе, çирĕпленсе пырĕ. Лайăх кил хуçи ахаль лармасть. Атьăр-ха кил таврашĕнче мĕн ĕç пурри-не пĕрле пăхса çаврăнар.

Çапла калаçса воспитатель черетлĕ инсценировка валли пĕчĕкскерсене пăчкă, витре, шăнкăрав тыттарса тухать.
«Пулăшакансем» исценировка.

В о с п и т а т е л ь.

Кӳршĕри Иван пиччен
Виçĕ çулхи ывăл пур.

Ы в ă л *(ача).*

Пăчкăпа ĕçлетĕп,
Вутă хатĕрлетĕп.

В о с п и т а т е л ь.

Натали инкен вара
Пĕчĕк хĕрĕ çитĕнет.
Урайне те хăй çăвать,
Тусанне те пуçтарать.
Хĕр ача пит тăрăшать,
Амăшĕ кулса пăхать.

Х ĕ р ĕ *(ача).*

Тап-таса халь кил-çуртра!

В о с п и т а т е л ь.

Галя аппан ывăлне
Шанса панă кĕтĕве.
Качакасене пăхать,
Тĕрлĕрен юрă юрлать.

Ы в ă л *(ача).*

Ай люли, ай люли,
Качакисем тутă-и?

В о с п и т а т е л ь.

Ачасем çумра чухне
Çăмăл атте-аннене.

Пур пулсан пулăшакан
Канма пулать ĕçсенчен.

Воспитатель инсценировка тăрăх калаçу йĕркелет.

## *3-мĕш вăйă.* **Стройка**

***Тĕллевĕсем:*** кашни ачана рольпе выляма явăçтарасси, вăйă выляссине аталантарасси, драматизаципе илĕртесси.

***Кăтарту хатĕрĕсем*:** строительство материалĕсем, тетте машинăсем.

***Ытти ĕç-хĕлпе çыхăнни:*** музыка, тавралăхпа паллаштарасси.

В ă й ă ю х ă м ĕ

Воспитатель ачасене кубиксенчен хăпартнă çурт патне илсе пырать. Кунта строительство ĕçĕсем пыни çинчен ăнлантарать, ачасене те çак ĕçе хутшăнма сĕнет. Асли – воспитатель, вăл стройка начальникĕн тивĕçĕсене пурнăçлаканĕ, ачасем – рабочисем.

В о с п и т а т е л ь. Пурăнмалли çурт хатĕр, халĕ сирĕнпе гараж хăпартăпăр. Пире шоферсем кирлĕ. Сашăпа Коля кирпĕчсем турттарĕç. Акă машинăсем. Лена, Оля, гараж купалама пулăшатăр-и?

Кирпĕч турттарма икшер ачана та сĕнме пулать: пĕри тиет, тепри турттарать.

Ачасем воспитательпе пĕрле гараж купалаççĕ. Воспитатель ачасене хăйсен ĕçне пăхса савăнма, киленме сĕнет. Унтан «Рабочисем стройкăра» вăйă-драматизаци йĕркелет.

В о с п и т а т е л ь.

Пĕррехинче туссемпе
Хамăр çуртăн айккинче
Гараж тăвас тĕллевпе
Тытăнтăмăр ĕçлеме:
Икĕ машин туп-тулли
Кирпĕч килчĕ ĕç валли.
– Эй, туссемĕр, хăвăртрах!
Ĕçлĕр кăшт вăр-вартарах!
Тарас мотор тапратса,
Плита килчĕ турттарса.

Арçын ача машинăпа тухать.

В о с п и т а т е л ь.

Лена мĕн пур стенана
Çирĕплетрĕ растворпа.

Хĕр ача кубиксемпе тухать.

В о с п и т а т е л ь.

Миша килсе çитрĕ,
Тăррине вăл витрĕ.

Арçын ача йывăç татăкĕсемпе тухать.

В о с п и т а т е л ь.

Хамăр çуртăн айккипе
Гараж турăмăр пĕрле!

Вăйă хыççăн «строительсем» ташлаççĕ. Воспитатель инсценировка тăрăх калаçу йĕркелет.

## *4-мĕш вăйă.* **Шывăм, шыв, пите çусам**

***Тĕллевĕсем:*** ачасене вăйă аталанăвне сăнама вĕрентесси, тасалăхпа харпăр хăйне пăхса тăрассине хăнăхтарасси, тĕрлĕ хусканусем пурнăçлас хастарлăха ӳстересси.

***Кăтарту хатĕрĕсем*:** пукане, çăвăнмалли хатĕрсем.

***Ытти ĕç-хĕлпе çыхăнни:*** музыка, пуплев аталанăвĕ, тавралăхпа паллаштарасси, физкультура аталанăвĕ.

В ă й ă   ю х ă м ĕ

Воспитатель ушкăна пичĕ-куçĕ вараланса пĕтнĕ пуканене илсе кĕрет. «Ачасем, пирĕн пукане тус урамра хăйăрпа вылянă та йăлт вараланса пĕтнĕ. Çитменнине тата хăй çăвăнасшăн та мар. Эсир, тусăмсем, яланах таса çӳретĕр-и?» – ыйтать вăл ачасенчен.
«Мила пăтăрмахĕ» инсценировка иртет.

В о с п и т а т е л ь.

Мила пит тĕлĕнтерет:
Хуп-хура паян çӳрет.
Çук, çуман вăл иртенпе
Хăйĕн çемçе аллине,
Кăпăш пит çăмартине,
Тураман кăтра çӳçне.
Эпир супăнь илĕпĕр,

Милăна тасатăпăр:
Ăшă шывра мунчала
Кăпăкланĕ савăнса.
Тасатĕ вăл хăлхана,
Вараланнă пит-куçа.
Пулĕ пирĕн пукане
Чи илемли тĕнчере!

Сăвва каланă май воспитатель пуканене çăвăнтарать. «Ачасем, шыв таса мара çуса янисĕр пуçне пире савăнăç та кӳрет. Халĕ сире çăвăнмалли юрă кĕтет», – пĕлтерет вăл.
«Çăвăнмалли юрă» хускану вăййи.

Воспитатель.

Ир-ирех паян хĕвел
Килчĕ хăнана,
Çупăрларĕ çут хĕвел
Пирĕн кил çурта.
Сарă тусăмпа пĕрле
Эп çапла юрлап:
Ля-ля-ля, ля-ля-ля,
Эх, аван та выляма!

Ачасем воспитательпе пĕрле юрлаççĕ.

Ачасем.

Ля-ля-ля, ля-ля-ля,
Эх, аван та выляма!

Воспитатель.

Ачасем хĕвелпеле
Тухрĕç урама.

Ачасем утаççĕ.

Воспитатель.

Чĕрне вĕççĕн çӳлелле,
Кармашрĕç пĕр кана.

Алăсемпе çӳлелле туртăнаççĕ.

Воспитатель.

Унтан, çемçен карăнса,
Пухрĕç сывлăшне.

Тарăннăн сывласа илеççĕ.

В о с п и т а т е л ь.

Вара ăшшăн йăл кулса
Таврăнчĕç килне.

Пукансем çине кайса лараççĕ. Ачасем воспитательпе пĕрле юрлаççĕ.

А ч а с е м.

Чĕрне вĕççĕн çӳлелле
Кармашса илер,
Унтан çемçен карăнса
Килелле кĕрер.

Ачасем сăвăра каланă хусканусене тăваççĕ.
Ун хыççăн пĕчĕккисем шыв кранĕ патне черетпе пырса çăвăнаççĕ.
Çăвăннă май воспитатель ачасем пĕлекен йăпатмăшсене каласа парать.

В о с п и т а т е л ь.

Шывăм, шыв, пите çусам,
Куççене çутăлтарсам,
Питĕме кăшт хĕретсем,
Кулчăр пĕчĕк тутамсем,
Çирĕп пулччăр ман шăлсем!

Воспитатель инсценировка тăрăх калаçу йĕркелет.

## Тупмалли


УМĔН КАЛАНИ ........................................................... 3
Авăн уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем ................ 5
Юпа уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем .............. 10
Чӳк уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем ................ 16
Раштав уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем .......... 24
Кăрлач уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем .......... 28
Нарăс уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем ............ 34
Пуш уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем .............. 40
Ака уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем ................ 48
Çу уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем .................. 55

БУ ЧР ДПО «Чувашский республиканский институт образования»
Минобразования Чувашии

**Доброва Надежда Васильевна**

# РАЗВИТИЕ ИГРОВОЙ ДЕЯТЕЛЬНОСТИ У ДЕТЕЙ РАННЕГО ВОЗРАСТА

*Методические указания для воспитателей дошкольных образовательных организаций, реализующих образовательные программы дошкольного образования с детьми 2–3-летнего возраста*

Редактор *О.И. Прокопьев*
Верстка *И.В. Матвеевой*
Корректор *Р.К. Игнатьева*

Подписано в печать . Формат 60х90/16. Бумага офсетная.
Печать офсетная. Тираж: 50 экз. Заказ № .

Чувашский республиканский институт образования.
428001, Чувашская Республика, г. Чебоксары, пр. М. Горького, 5.

Отпечатано в типографии «Перфектум». г. Чебоксары, ул. К. Маркса, д. 52.
Тел.: (8352) 32-05-01